ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

1 (4415) №, 2015, январь / кăрлач /, 15
(1931 çулхи январĕн / кăрлачăн / 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

## Литературăна, Константин Иванова халаллана çулталăк ăнăçлă пуçланчĕ



**Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Ен литераторĕсемпе тата культура учрежденийĕсен ĕçченĕсемпе ирттернĕ тĕлпулура кăçалхи çулталăка Раççейре Литературăна, пирĕн республикăра Константин Иванова халаллана май тĕрлĕ ыйтăва хускатрĕ.**

Обществăра литературăпа вулав туртăмне пысăклатмаллине, тăван халăхăн культурăпа истори еткерне сыхласа хăвармаллине палăртрĕ республика ертÿçи.

2015 çулта Литература тата Константин Иванов çулталăкне халаллана мероприятисем чылай пулĕç. «Вĕсем чăваш халăхĕн, уйрăмах çитĕнекен ăрăвăн культура шайне ÿстерме, регионсен хушшинчи хутшăнăва çирĕплетме пулăшĕç», – терĕ ЧР Культура министрĕ Вадим Ефимов.

Вĕрентÿпе çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов çамрăк ăрăвăн ăс-хакăл воспитанийĕнче те литература пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ. Вĕренÿ учрежденийĕсенче пултарулăх çыннисемпе тĕлпулусем ытларах ирттерес тĕлĕшпе ĕçлеме чĕнсе каларĕ. Искусствăпа, культурăпа кăсăкланакан ачасене ытларах тăрăшма, пĕлме хавхалантарасса шантарчĕ.

Çавăн пекех «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ, Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай, Михаил Кондратьев профессор, Чăваш халăх писателĕ Сергей Павлов, Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер, Чăваш наци музейĕн директорĕ Ирина Меньшикова, Чăваш наци библиотекин директорĕ Светлана Старикова, республикăри тĕрлĕ вĕренÿ учрежденийĕсен ĕçченĕсем те хăйсен сĕнĕвĕсемпе паллаштарчĕç.

Пухăннисем Чăваш кĕнеке издательстви пичетлесе кăларакан кĕнекесен, уйрăмах тăван чĕлхепе çырнисен сутлăх хисепне ÿстерес ыйтăва та сÿтсе яврĕç.

Республика Пуçлăхĕ çак пĕлтерĕшлĕ пулăма, Литература тата Константин Иванов çулталăкне ăнăçлăн та тухăçлăн ирттерес тĕллевлине палăртрĕ. Мероприятие пухăннисене тав турĕ.

Шупашкарти 24-мĕш шкулта вĕренекен çамрăк талантсене Виктория Ласточкинăпа Анастасия Сиговăна Михаил Игнатьев Чăваш Республикин гербне сăнлана сехет парнелерĕ. Вĕсем хăйсен сăввисене пухăннисене вуласа пачĕç.

**Сăнÿкерчĕке cap.ru сайтран илнĕ.**

ÇĔНĔ ĂРУ

## Текех сивĕ мар «çăмхасене»



Кĕркунне, хĕл çывхарас умĕн, шкул çывăхĕнче хуçасăр тăвата кушак çури чĕтресе ларнă. Ачасене курсан хирĕç чупнă та куçран пăхса макăрнă хайхискерсем. Е хÿтлĕх шыраса урисем çумне пырса йăпшăннă. Çав тери хĕрхеннĕ пĕчĕкскерсене арçын ачасем, пĕр-пĕринпе канашланă та пĕлÿ çурчĕ çывăхĕнчи йывăççсен айне вырăн туса панă. Вĕр-çĕнĕ хăмасенчен çурт ăсталанă. Алăкне касса шала ăшă япаласем хунă. Кĕрсе çÿреме лайăх пултăр тесе пусмине те вырнаçтарнă. Чăн та, иленнĕ пĕчĕкскерсем йăвана! Çимеллирен те тулăх пурăнма тытăннă. Мĕн кăна илсе килмен кашни хăйĕн килĕнчен! Вĕсемшĕн нимĕн те шеллемен: кăлпассипе çăкăрне те, печенипĕремĕкне те. Хĕл сиввисем çывхарса пынăçемĕн вĕренекенсем канăçне çухатнă. Мăр-мăрсем чĕтреме тытăннă. Телее, иккĕшне усрама илсе каякан тупăннă. Теприсемшĕн те пĕррехинче савăнăçлă кунсем çывхарасса шансах тăнă Калинино шкулĕн ачисем.

– Ĕмĕтленни харама каймарĕ. Тепĕр иккĕшĕ валли те хуçа тупăнчĕ. Çĕнĕ çула эпир кăна мар, пирĕн кушак çурисем те ăнăçлă кĕтсе илнишĕн питĕ савăнтăмăр. Вĕсем халĕ ăшă пÿртре, ырă хуçасем патĕнче куллен тутлă сĕт çисе савăнаççĕ. Ĕнтĕ сивĕ кунсене манăçа та кăларнă ахăртнех, – теççĕ яланах кирек кама та пулăшма хатĕр хастар чунлă Ярик Федоровпа Саша Кожевников.

*Луиза **ВАСИЛЬЕВА.***

Вăрнар районĕ,
Калинино шкулĕ.
**АВТОР сăнÿкерчĕкĕ.**

СЕМИНАР

# Кашни самант, хускану – сăнӳкерчĕкре



**Етĕрне районĕнчи Палтай шкулĕнче фотопĕрлешӳсен ертӳçисен тата сăнӳкерӳпе кăсăкланакан çамрăксен республика семинарĕ иртрĕ. Çак шкултан вĕренсе тухнă, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Илья Степанович Клочков ку хутĕнче ăна хăйĕн тăван шкулĕнче irттерес тенĕ. Мероприятие кĕçĕн классен вĕрентекенĕ, республикăри учительсен хушшинче иртекен «Ырăлăх педагогики» фотоконкурса çулсерен хутшăнакан Майя Германовна Шуверова ертсе пычĕ.**

Çак кун шкула хăнасем йышлăн пухăнчĕç. Галина Петровна Ярославцева шкул директорĕ вĕсене кăмăллăн кĕтсе илчĕ. «Асамат кĕперĕ» ташă ушкăнĕнчи илемлĕ чăваш тумĕ тăхăннă çамрăк артистсем хăнасене çăкăр-тăварпа хăналарĕç. Сцена çинче «Барбарики» кĕçĕннисен ушкăнĕ пухăннисене юрă-ташăпа савăнтарчĕ.

Мероприяти пуçламăшĕнчех ачасене хушма пĕлӳ паракан ЮНИТЭКС çарпа патриот центрĕн ĕçченĕ Светлана Вячеславовна Пудовкина шкул директорне тав сăмахĕ каласа ЧР Журналистсен союзĕ ячĕпе кĕнекесем парнелерĕ. Майя Германовнăна та пултарулăхра пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Тав хучĕпе тата кĕнекесемпе чысларĕ.

– Пирĕн пысăкăс мар, анчах хăтлă та тараваt шкула килсе хавхалантарнăшăн сире пысăк тав. Коллективăн пĕр тĕллев – ачасене тӳрĕ çул çине тăма пулăшасси, пĕлӳ парасси, тĕрлĕ ĕçе явăçтарасси. Сăн ӳкерме те вĕренеççĕ майĕпен. Çак ăсталăха аталантарма ятарлă кружок йĕркелесен те аван пулĕччĕ, – терĕ Галина Петровна. Анатолий Абрамов фотоăста сцена çинчех пĕчĕк мастер-класс кăтартрĕ. Çак ĕçĕн хăш-пĕр вăрттăнлăхĕсене уçса пачĕ. Ракурс, фотожанр тата ытти пирки тĕплĕн ăнлантарчĕ.

– Сăнӳкерчĕк вăл – пурнăçа йĕрлесе пыраканĕ. Ача çут тĕнчене килсе мăшăрланнă тапхăр таран, унтан малалла та тата ытти пĕлтерĕшлĕ самантсене сăн ӳкерсе сыхласа хăварма пулать, – терĕ вăл сăмахне вĕçленĕ май.

Илья Степанович вăрçă вăхăтĕнчи сăнӳкерчĕксемпе паллаштарчĕ. Пысăк экран çинче чуна çӳçентерекен ӳкерчĕксем куç умне черетпе тухса пычĕ. Вăрçă хирĕнче нимрен хăрамасăр хăйсен ĕçне пурнăçланă фотокорреспондентсен ячĕсене те пĕлме май пулчĕ ку презентацире.

Муркаш районĕнчи Ильинка шкулĕнче вĕрентекен, фотоĕçпе кăсăкланакан Игорь Александрович Каргин çамрăк сăнӳкерӳçĕсене фотоаппарат туяннă чухне мĕне тимлемеллине каларĕ.

– Чи кирли – сирĕн çак ĕç патне туртăм пулмалла. Унсăрăн хаклă та чаплă фотоаппарат та ӳкерчĕксене чун парнелеймĕ, – ăнлантарчĕ вĕрентекен.

Красноармейски шкулĕнче технологи предметне вĕрентекен Иван Петрович Матвеев та хăйĕн презентацийĕпе паллаштарчĕ. Пейзаж ӳкернĕ чухне уйăрмах мĕне пăхăнмаллине, тимлĕх уйăрмаллине каласа кăтартрĕ. Тĕрĕс ӳкернĕ сăнӳкерчĕксем паха та хаклă, çавăнпа та кашни кадра асăрханса, тĕплĕн тумаллине палăртрĕ вăл.

Фотоĕçе юратакансем те, унпа кăсăкланакансем те, çак ĕçе тин хăнăхакан шкул ачисем те ку семинарта нумай çĕннине пĕлчĕç. Пĕр-пĕрин опычĕпе ылмашăнни вĕсене пултарулăхра çитĕнӳсем тума хавхалантарнине палăртрĕç.

***Нина ЦАРЫГИНА.***
**Анатолий АБРАМОВ сăнӳкерчĕкĕ.**


# ĂША САЛАМСЕМ





Самар облаçĕнчи Шунтал районне кĕрекен Аксаку шкулĕнче вĕренекен **Дмитрий МЯСНИКОВА** çуралнă кун ячĕпе саламлатпăр. Кашни самантпа савăнса пурăнма ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей тата чи ыррине кăна сунатпăр. Ăнăçу яланах санпа пĕрле пултăр! Пултарулăхра малашне те çитĕнӳ тăвасса шанатпăр.

***Юлташĕсем тата пĕрле вĕренекенсем.***

✧ ✧ ✧

Кăрлачăн 14-мĕшĕнче юратнă аппа, Етĕрне районĕнчи Кăташ ялĕнче пурăнакан **Анфиса Михайловна КОНДРАТЬЕВА,** 75 çулхи юбилейне паллă турĕ. Мĕн пĕчĕкрен ĕçпе писĕхнĕскер пĕрре те алă усса лармасть, пушă вăхăт тупăнсанах хаçат-журналти хыпарсемпе паллашать. Çуралнă кун ячĕпе ăна чун-чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, кунсерен ăнăçупа телей сунатпăр.

***Йăмăкĕ Нина Михайлова, ачисем тата мĕн пур тăванĕ.***

✧ ✧ ✧



Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Турханкассинчи **Лидия Ильинична ПЕЧНИКОВĂНА** çуралнă кунĕпе саламлатпăр.

Юратнă анне, кукамай, эсĕ пирĕн чи хаклă çыннăмăр. Сана çирĕп сывлăх, телей, савăнăç сунатпăр.

***Ачисем, мăнукĕсем, мăшăрĕ.***

✧ ✧ ✧

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чурпай ялĕнче пурăнакан **Ольăпа Марина ОХТЯРОВĂСЕНЕ тата Димăпа Саша ИЛЬИНСЕНЕ** Кивĕ Çĕнĕ çул тата Раштав уявĕ ячĕпе саламлатпăр. Çулталăк ăнăçлă пултăр, тĕллевĕрсем пурнăçланса пыччăр.

***Тус-тантăшĕсем.***


Конкурс

# «Чи илемлĕ валентинка»

*Февралĕн 14-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнче Çветтуй Валентин кунне паллă тăвать. Çавна май эпир хамăрăн вулаканăмăрсене валли конкурс йĕркелеме шут тытрăмăр. Унта 1-11 класс ачисем хутшăнма пултараççĕ. Чи кирли, çав тери хăй евĕрлĕ те илемлĕ валентинка ăсталасси. Открыткăна ахаль е хытă хутран тума, капăрлăхĕсене пусмаран, фольгаран е ытти материалтан хатĕрлесе çыпăçтарма пулать. Салам сăмахĕсем лайăх вуланччăр. Мĕн сунса çырнине сăвăлла та, прозăлла та хайлама пулать, анчах ăна кама халалланине асăнмалла мар.*

*Пултарулăх ĕçĕсене февралĕн 6-мĕшĕччен редакцире йышăнатпăр.*


Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1783 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 66
Пичете январь уйăхĕн 14-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.


84 çул тултарнă ятпа саламлатпăр!

«Тантăша» çуралнă кунĕ ячĕпе саламласа редакци журналисчĕсене малашне те хаçата интереслĕ туса пыма сĕнетĕп! Эпĕ «Пионер сасси» хаçат вуласа çитĕннĕ. Пире атте хаçат çĕнĕрен тухма пуçласан тӳрех çырăнса пачĕ. Ăна çемйипех тупăшса вулаттăмăр, кунта иртекен конкурссене хутшăнаттăмăр. Хам шкулта ĕçлеме пуçласан вĕренекенсене те яланах «Пионер сасси», унтан «Тантăш» хаçат йĕркелекен конкурссене явăçтарма тăрăшаттăм. Хаçат пире чысланă Хисеп хучĕ те чылай. Çемьери ачасем те хаçат вуласах, тĕрлĕ конкурс-викторинăна хастар хутшăнса çитĕнчĕç, халĕ те май пулсан ăна вулаççĕ. Çемье «Тантăш» хаçата та, «Теттене» «Самант» журналсене те çулленех çырăнса илет.

Пирĕн шкул ачисем те хаçатпа туслă.

Коллектива çирĕп сывлăх, çитĕнӳсем тата пурнăçра телей сунса

Галина ЗОТОВА вĕрентекен.

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Штанаш шкулĕ.




## Сывă-и, хаçат редакцийĕ...

Сирĕн пата Шупашкар районĕнчи Апашри вăтам шкулта вĕренекен Николай Беляев çырать. «Тантăш» хаçата пĕрремĕш хут çыратăп. Çак çырура хамăр класс çинчен кĕскен пĕлтересшĕн.

Эпĕ тăваттăмĕш класра вĕренетĕп. Пирĕн класс ертӳçи Элла Геннадьевна. Хамăр пысăках мар йышра эпир вун çиччĕн питĕ туслă пурăнатпăр. Час-часах ăмăртусене, конкурссене, олимпиадăсене хутшăнатпăр. Акă нумаях пулмасть «Чи пултаруллисем» ăмăрту иртрĕ. Унта хутшăнма эпир лайăх та тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр. Тăрăшни сая каймарĕ: малти вырăнсене тухса палăртăмăр. Кĕçех олимпиадăсем те пуçланĕç. Унта хутшăнма Элла Геннадьевнăпа класра задачăсем шутлатпăр, тĕрлĕ ыйтусем сӳтсе яватпăр.

Çĕнĕ çул касĕ валли хамăр класа эрешсемпе, теттесемпе капăрлатни те асрах. Çакăн пек пурăнатпăр эпир!

***Николай БЕЛЯЕВ.***

Шупашкар районĕ,
Апаш шкулĕ.

## Чи юратни – «Тантăш»

Юратнă «Тантăш» хаçатăм мана питĕ килĕшет. Унта чылай интереслĕ калавсем, асамлă юмахсем тата çамрăк поэтсен сăввисем тăтăшах тухаççĕ. Ачасем хăйсем çинчен çырса кăтартни те кăмăла каять. Пĕррехинче юратнă хаçатра пичетленнĕ «Анне» ятлă сăвă килĕшрĕ. Çывăх çыннăмăрăн çуралнă кунĕ валли çак сăвва вĕренетĕпех тесе шут тытрăм. Вĕрентĕм, каласа кăтартрăм. Анне питĕ хĕпĕртерĕ çакăншăн.

Хаçатри юмахсем те интереслĕ. Эпĕ тăхăр çулта чух мана юратнă кукамай пĕрремĕш хут «Тантăш» туянса пачĕ. Çав кунтан хаçат килнĕ-килмен юмахсен страницине малтан уçса вулаттăм. «Упа» ятлă халап питĕ килĕшнĕччĕ, халĕ те астăватăп. Кунти пуçватмăшсем те самай кăткăс пулин те питĕ шутлаттараççĕ, пуçа ĕçлеттереççĕ.

Тĕлĕнмелле хаçат вăл «Тантăш»!

***Анна ВАНЮШКИНА,***
***4 класс.***

## Хаваслă уяв

Хура çĕре шурă юр хуплама пуçласассăнах кашни çын хĕл тапхăрĕн чи пысăк, чи пĕлтерĕшлĕ уявне чăтăмсăррăн кĕтме пуçлать. Паллах, эпĕ те çаплах кĕтрĕм. Ман шутпа, ачасемшĕн çак уяв тата та чăтăмсăр, чунтан кĕтни. Мĕншĕн тесессĕн тĕпренчĕксем пылак парнепе савăнтаракан, шур сухаллă Хĕл Мучие иртен пуçласа касчен кĕтеççĕ-çке...

Çĕнĕ çул – хавласлă уяв. Сĕтел тулли апат-çимĕç, пӳрт тулли юратнă тăван-пĕтен, тулли савăк кăмăл. Эпĕ 2015-мĕш çула Елчĕк районĕнче пурăнакан иккĕмĕш сыпăкри йăмăксемпе кĕтсе илме шутларăм. Пурте тĕпеле пухăнтăмăр: тĕрлĕ кукăль-çăмах, салат ăсталама пуçларăмăр. Тăрăшни сая каймарĕ, сĕтел çине вырăн юлмиччен апат-çимĕç лартрăмăр. Кун кас енне сулăнсан эпир ял клубне кайрăмăр. Унта йăмăкăм Леся Карсакова юрланине киленсе итлерĕмĕр. Тинех Çĕнĕ çула кĕтсе илме вăхăт çитрĕ. Йăмăксемпе, шăллăмсемпе, юлташсемпе пурте пĕрле сĕтел хушшине ларса апатлантăмăр. Расçей Президенчĕ В.В. Путин салам сăмахĕ каланă чух ура çине тăрса итлерĕмĕр. Çакăн пек хавлаcлă ушкăнпа, савăк кăмăлпа шавлăн кулкаланă вăхăтра килсе çитрĕ кĕтнĕ çул. Кăçал ман пурнăçра чи лайăххисенчен пĕри пулĕ тесе ĕмĕтленетĕп. Ыттисен те çаплах пултăрччĕ!

***Маша САМДЕЛОВА,***
***ЧПУ, 2 курс.***

## Кĕтнĕ парне


**© *Кристина ВАСИЛЬЕВА* (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа)** ***ӳкерчĕкĕ.***

Сисмерĕмĕр те кивĕ çулпа сывпуллашса çĕнĕ çула кĕтĕмĕр. Кашни ача валли Çĕнĕ çул вăл – пысăк уяв! Капăрлатнă чăрăш, Хĕл Мучи, тĕрлĕ-тĕрлĕ парнесем... Ку вăл – чи асамлă вăхăт! Анчах ача çуртĕнчи ачасем валли парне пулĕ-ши? Паллах, пулать. Шупашкар хулинчи 24-мĕш шкул ачисем тахçантанпах вĕсен валли çемçе теттесем, шăккалатсем хатĕрленĕ. Уяв умĕн вĕсене парнесемпе савăнтарчĕç.

Акă ачасем хăйсен парнисем çинчен мĕн калаççĕ:

– Эпĕ – Вика Александрова, 4-мĕш «В» класра вĕренетĕп. Манăн пушă вăхăт сахалтарах, çапах та эпĕ çемçе теттесем çĕлеме вăхăт тупатăп. Хитрескерсене эпĕ ача çуртĕнчи тантăшăмсене парнелерĕм. Вĕсене çирĕп сывлăх, савăнăç сунатăп, – терĕ хавлаcлă хĕрача.

– Эпĕ – Софья Платонова. Викăпа пĕр класра вĕренетпĕр. Эпĕ те ачасем валли пысăках мар парне хатĕрлерĕм. Шăккалатсем кучченеç пулччăр терĕм. Çĕнĕ çул пуриншĕн те пысăк уяв-çке, пурне те телей! – тесе вĕçлерĕ хайĕн сăмахне савăнăçлăн Софья.

Кашни çулах эпир çак акцие хутшăнатпăр. Тантăшсем парнесĕр юлманни питĕ савăнтарать!

***Светлана ФЕДОТОВА,***
***вĕрентекен.***

Шупашкар,
24-мĕш шкул.

## Алăра – «Ылтăн уçă»

Эпир, Карапашри пуçламăш шкулта вĕренекенсем, Çĕнĕ çул уявне чăтăмсăррăн кĕтрĕмĕр.

Акă çав кун çитрĕ. Зала ешĕл чăрăш лартрĕç. Унăн ырă шăрши сăмсана кăтăклать. Эпир тетте курупкисене уçса вăрман «пикине» капăрлатма пуçларăмăр.

Кашни туратти çине тĕрлĕ-тĕрлĕ теттепе шăрçасем, йăлтăрккасем çакрăмăр. Технологи урокĕсенче хамăр алăпа ăсталанă капăрсем те чăрăш çинче вырăн тупрĕç. Епле илемлĕ елка!

Шкулта маскарад та иртрĕ. Кам кăна çук уявра! Упасем, Мулкачсем, Юр пĕрчисемпе Клоунсем... Пурте хавлаcлă! Хĕл Мучипе Юр пике пире парнесемпе савăнтарчĕç. Мана Хĕл Мучи вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пынăшăн А. Толстойăн «Ылтăн уçă» кĕнекине парнелерĕ. Эпĕ питĕ савăнтăм. Лайăх вĕреннĕшĕн аттепе анне те ырларĕç.

***Евгения ЕФРЕМОВА.***

Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Карапаш шкулĕ.





# Пурнăҫри пĕрремĕш сочинени

Шупашкарти улттăмĕш шкулăн иккĕмĕш «г» класĕнче шăплăх хуҫаланать. Пурте шухăша путнă. Ара, ачасем паян пурнăҫра пĕрремĕш хут сочинени ҫыраҫҫĕ-ҫке. Ку таранччен кун пек ĕҫе пуҫăнса курманччĕ-ха вĕсем.

– Тăрăшăр, ачасем, тăрăшăр. Хăвăрăн шухăшлава тетраде куҫарăр. Ĕнтĕ кунта сире час-час кĕнеке вулани те пулăшĕ. Акă, сăмахран, анне ҫинчен ҫырнă хайлава вуланă ача юратнă ҫынни пирки мĕн тери хитре сăмахсемпе шăрҫаласа хурĕ. Ан манăр, вулама юратаканăн ҫеҫ чĕлхи хитре те яка, унăн сочиненине тишкерме те кăмăллă. Кирлĕ пулсан куҫҫуль те кăларттарĕ, – терĕ класс ертӳҫи Валентина Васильевна Францева партăсен хушшипе хуллен утнă май.

Класс шăпланчĕ. Пурте пуҫĕсене пĕксе хĕрӳ ĕҫе пуҫăнчĕҫ...

## Кайăк чĕппи

Ҫуллахи илемлĕ куна ҫав тери юрататăп эпĕ. Иртнĕ ҫул хамăр ҫывăхри ҫурт умĕнче усăлса ҫӳреме шухăшларăм. Ара, хитре ҫанталăк урамаллах кăчăк туртать ҫав.

Усă сывлăшра киленнĕ вăхăтра сасартăк кайăк чĕппи сасси хăлхана кĕрех кайрĕ. Малтанах ăнланмасăр йĕри-тавралла тинкертĕм, унтан ҫӳлелле йывăҫ тăрринелле пăхрăм. Нимĕн те асăрхамарăм. Каллех ҫав сасă. Чим, асфальт ҫинче, машинăсем ҫӳрекен вырăнта, чĕпĕ ларать. Пĕчĕкскер, йăваран ӳкнĕ пулас, аптăранă енне ҫул ҫине чупса тухнă ахăртнех. Чĕре пĕҫерсех кайрĕ.

– Сасартăк машина айне пулсан? – тесе сехĕрленсе ӳкрĕм те унталла васкарăм.

Кунталла ҫиҫĕмле хăвăртлăхпа машина килет. Ҫук, водитель асăрхаса ĕлкĕреймест пĕчĕкскере, куҫ умĕнчех таптаса каять ĕнтĕ. Ҫапах хам ҫухалса каймарăм, водителе вăхăтра асăрхаттарас тесе алла ҫĕклерĕм. Чăнах, вăл чарăнчĕ. Хăпăл-хапăл айăпсăр чуна илсе хам ҫума чăмăртарăм. Ачашласа юратрăм та симĕс курăк ҫине ятăм. Ҫав вăхăтра, тĕлĕнмелле пулин те, амăшĕ вĕҫсе килчĕ.

Чунăм савăнчĕ. Ара, ырă ĕҫ турăм-ҫке эпĕ! Чĕп пурнăҫне ҫăлса хăвартăм. Класс ертӳҫи Валентина Васильевна Францева пире ялан сăваплă ĕҫ тума вĕрентет, унăн сăмахĕсене вара эпир нихăҫан та асран кăлармастпăр.

**Вадим МИХАЙЛОВ.**

## Парне – арлан!

Анне мана час-час парнепе савăнтарма тăрăшать. Ҫĕнĕ кĕпепе е кофта, туфли илсе парсан, чăн та, хĕпартланатăп. Тепĕр чухне тĕкĕр умĕнчен те кайма пĕлместĕп.

Ҫуркунне вара вăл мана арлан туянса парсан виҫесĕр савăнтăм! Хĕпĕртенипе качака путекки пек чăлтти-чалтти те сиккелерĕм. Кун пек чĕрĕ чунсене мĕн тери юрататăп та, маншăн тĕлĕнмелле парне пулчĕ.

Ачашăн Дюдик тесе чĕнме тытăнтăмăр ăна. Хитрескере пурте юрататпăр. Кĕл тĕслĕ хăй, ҫурăмĕ ҫинче йăрăм-йăрăм шурă йĕрсем пур. Хырăмĕ вара шап-шурă, юр пек. Маттурскер купăста, кишĕр, хĕвелҫаврăнăш вăрри тата сыр ҫиме кăмăллать.

Читлĕхне те хамах тасататăп. Эх, ун хыҫҫăн таса вырăнта киленсе вылять вара кăмăлĕ туличченех. Ятарласа хурса панă урапа ҫинче ҫаврăнса ярăнма та пĕлет, читлĕх тимĕрне кăшлать пĕчĕк те ачашскер. Дюдика эпĕ питĕ-питĕ юрататăп.

**Виолетта СЕМЕНОВА.**

## Йăмăксемшĕн тунсăхлатăп

Канмалли кунсем ҫитессе чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Ун пек чухне уйрăмах яла чунăм туртать. Ара, иккĕмĕш сыпăкри ырă кăмăллă та тараватă йăмăкăмсемшĕн тунсăхлатăп-ҫке. Вĕсемпе тĕл пулсан темчченех тĕрлĕ вăййа вылятпăр. Аслисем сĕтел хушшине йыхравласан тин хамăрăн хырăм выҫнине туйса илетпĕр. Усă сывлăш темле эмелрен те паха пулнине шута илсе урамра та усăлса ҫӳретпĕр.

Хулара чухне те кану кунĕ хĕрӳ иртет. Ӳкерме юратнăранах шурă хут ҫине тĕрлĕ пулăма куҫаратăп. Альбомра кушак та, йывăҫсем те, юхан шыв та, хĕвелпе уйăх та – тем те пур.

Пуканесене те савăнтарас тетĕп. Вĕсем валли картонран ятарлă пӳрт хатĕрлетĕп. Унта ҫав хутранах ăсталанă кроватьсемпе сĕтел-пукана вырнаҫтаратăп. Хитре пусма татăкĕсенчен алăпах вырăн тавраш ҫĕлетĕп. Хам ҫапла пултаруллă пулнишĕн ҫав тери хĕпĕртетĕп.

Тĕрĕссипе, кашни канмалли кунра мĕн те пулин усăлли тăвас килет манăн.

**Вероника КОНСТАНТИНОВА.**

## Спорт – чун уҫҫи

Каратэ секцине пĕрремĕш класра чухнех ҫӳреме тытăнтăм. Ку спорт тĕсне ҫав тери килĕштеретĕп. Ҫавăнпа ытларикунпа эрнекун тренировкăсене хавассах ҫӳретĕп. Ĕнтĕ эпĕ симĕс пиҫиххи илме те пултартăм. Ĕмĕтĕм вара – хăҫан та пулсан пĕр-пĕр хĕрӳ ăмăртура ҫĕнтерӳ картлашки ҫине хăпарасси. Аннене питĕ савăнтарас килет-ҫке-ха манăн.

Мĕн пĕчĕкрен спортпа туслашни хул-ҫурăма тĕреклетме кăна мар, сывлăха ҫирĕплетме те пулăшать. Пĕчĕк йăмăкăм та мана кура халех хăй пĕлнĕ пек хусканусем тăват.

– Пичче, кур-ха, кур! Эпĕ епле маттур! – тет хаваланса та хăлаҫланса.

Мухтатăп ăна, ҫупăрласа юрататăп. Эх, кун пек чухне пушшех хаваcланать пĕчĕкскер! Шкула ҫӳреме тытăнсан Софийăна та каратэ секцине ҫырăнтарас ĕмĕтлĕ эпĕ. Ан тив, хам пекех спорта чунтан юратма вĕрентĕр.

**Айдар АНДРЕЕВ.**

## Манăн анне – чи кăмăлли!

Туслă ҫемьере пурăннишĕн чунтан хĕпĕртетĕп.

Аннене Ирина Петровна тесе чĕнеҫҫĕ. Унăн тума пĕлмен ĕҫĕ те ҫук. Кил-тĕрĕшре тасалăхшăн тăрăшнисĕр пуҫне ҫав тери тутлă пĕҫерет. Тĕрлесси, пĕр-пĕр хитре япала ҫĕлесси те уншăн чун уҫҫи кăна. Машина ҫӳретесси те ют мар аннешĕн.

Юратнă ҫыннăмăр яланах пирĕншĕн тăрăшать. Кирлĕ чух пирĕнпе савăнать. Лайăх сĕнӳ-канаш пама та ăста вăл. Ырă кăмăллăскер кирек кама пулăшма хатĕр. Мана та авă халех ҫумне ҫыпăҫма вĕрентет. «Кайран хăвнах кирлĕ пулĕ», – тет ăшпиллĕн.

Нумаях пулмасть вăл «Супер анне» конкурса хутшăнчĕ. Унта вăл жюри членĕсене хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарчĕ. Вĕсем вара аннен тĕррисене курма, тутлă ҫимĕҫĕсене астивме, юррисене итлеме хапăл пулчĕҫ.

Аннене эпĕ питĕ-питĕ юрататăп! Вăл ҫак ҫĕр ҫинче чи ырри, чи кăмăлли, чи маттурри!

**Дарья САЛМИНА.**

## Канмалли кун яла васкатăп

Ялта кроликсем ҫăвăрласан канăҫа йăлт ҫухатрăм. Вĕсенчен пĕри шурă, ыттисем сăрă тĕслĕ. Ҫемҫескерсене ачашламасăр ниепле те чăтаймастăп. Хам ҫума чăмăртаса ҫав тери юратас килет пĕчĕкскерсене.

Пĕр вырăнта ларма пĕлмеҫҫĕ хайхискерсем, кунĕпех читлĕхре унталла-кунталла чупкалаҫҫĕ. Вĕсен ҫывăхне пырса тăрсан хăранăран пĕр кĕтессе пырса лăпчăнаҫҫĕ. Тытас шухăшлине пĕлсе-ши, канăҫсăрланма пуҫлаҫҫĕ те каллех арăш-пирĕш тĕркĕшме тытăнаҫҫĕ. Эх, айвансем! Читлĕхрен ăҫта тарса пытанĕҫ-ши? Самантрах ярса тытатăп тусăмсене. Турткалашаҫҫĕ, вĕҫерĕнсе тарасшăн ахăртнех. Ҫитменнине чĕрнисемпе чаваҫҫĕ! Ах, ыраттарать ун пек чухне. Апла пулин те, пĕрех кăмăла каяҫҫĕ. «Хитрескерсене хулана илсе кайсан мĕн тери аван пулĕччĕ», – тесе шухăшлани те пĕрре мар пулнă.

Ĕнтĕ кашни канмалли кун яла васкатăп эпĕ. Кроликсем апат ҫинине, шыв ĕҫнине тепĕр чух темччен сăнаса ларатăп. Питĕ килĕшеҫҫĕ мана хамăн тусăмсем. Тепĕр чухне вĕсенчен пĕрре те уйрăлас килмест. Ара, хитрескерсем ҫав тери куҫа илĕртеҫҫĕ-ҫке!

**Федя АРТЮШКИН.**

## Шустрик

Манăн хĕрлемес тĕслĕ кушак ҫури пур. Пĕчĕкскере ачашшăн Шустрик тесе чĕнетпĕр. Питĕ выляма ăста. Тепĕр чух манран пытанса ларать, е пĕр-пĕр япала тупса айкашма тытăнать. Кăмăлĕ савăк чухне пӳртри япаласене айăн-ҫийĕн ҫавăрттарма юратать. Ним тума та ҫук. Самантлăха пăрăнсан сĕтел ҫинчи ручкăна урайне ӳкерсе таҫта ҫитиех кустарса кайма пултарать. Эх, пикенетĕп вара ăна шырама! Ара, уроксене вăхăтра пурнăҫласа пĕтермелле, унсăрăн хама кансĕр пулать.

Йывăҫсем ҫине хăпарса кайма юратать тепĕр чух! Эпĕ ăна тытас тесе тăрăшатăп. Кайран, йăлăхсан хăех ман пата килсе ларать. Ывăннă хыҫҫăн сĕт ҫиес тесе савăчĕ патне чупса пырать. Яшкана та, какайпа шăмма та кăмăллать хайхискер. Эпир вара уншăн нимĕн те шеллеместпĕр. Тепĕр чух чи тутлине ăна ҫитерес килет.

Тата та пĕчĕк чухне, утма вĕреннĕ вăхăтра, унăн тяпписем чĕтретчĕҫ. Пĕррехинче вара палас тасатас тесе пылесоса туртса кăлартăм. Унăн шавĕ Шустрика хăратрĕ пулас, вăл туххăмрах кровать айне кĕрсе ҫухалчĕ.

Кула-кулах ăна унтан илсе тухрăм та хам ҫума чăмăртарăм. Хăйне юратнине чухларĕ вăл, ҫавăнпа пушшех ман ҫума тĕршĕнчĕ. Пылесос енне вара питĕ тĕлĕнсе пăхрĕ.

**Диана МИХАЙЛОВА.**

## Чăваш наци конгресĕн вĕренӳпе ăслăлăх комитечĕ, «Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕ» общество организацийĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсен секцийĕ, чăваш ачисен «Тантăш» хаçачĕ



**чăваш литературин классикĕ К.В. Иванов çуралнăранпа кăçал 125 çул çитнине халалласа «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» сăмахлăхпа ӳкерӳ пултарулăхĕн конкурсне irttерессине пĕлтерессĕ.**

### Конкурс тĕллевĕсем:

– Ачасене чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕн, аслă поэтăн К.В. Ивановăн çынлăхне, пархатарлă ĕçталăхне тата ырă енĕсене курма, вĕсем çинчен тĕплĕнрех пĕлме хавхалантарасси.

– Илемлĕхе туякан шкул ачисене тупса палăртасси, вĕсене литература тата ӳкерӳ ĕçĕпе çывăхрах туслаштарасси.

– Çамрăк çыравçăсемпе ӳкерӳçĕсен пултарулăхĕпе ăсталăхне тата вĕсен тавракурăмне ӳстерме пулăшасси.

**«Çĕнĕ ятсем уçатпăр»** литературăпа ӳкерӳ пултарулăхĕн конкурсне Чăваш Республикинче тата Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче пурăнакан 8-11-мĕш классенче вĕренекенсем хутшăнма пултараççĕ.

### Ăмăртура çак номинацисем пулаççĕ:

1. **«Чи лайăх сăвă».** Сăвăсенче Константин Ивановăн сăнарне тĕрлĕ енчен сăнарласа кăтартмалла. Конкурса компьютерпа пичетленĕ 3 сăвăран кая мар тăратмалла.

2. **«Чи лайăх эссе».** Эссе теми: «Ырри усала çĕнтерет». Çыру ĕçĕнче пурнăçри тата Иванов хайлавĕсенчи Ырăпа Хаяр кĕрешĕвне кăтартмалла, Хаяр вăйлă пулсан та Ырри çĕнтерет философилле шухăша уçса памалла. Эссене компьютерпа А-4 форматлă шурă хут листи çинче, 14 шрифтпа, пĕр анлă (одинарный) интервалпа 5 страницăран ытла мар пичетлемелле. Страницăсене номерлесе тухмалла.

3. **«Чи илемлĕ ӳкерчĕк».** Пĕр е тĕрлĕ тĕспе, кăранташпа е суллă сăрăпа, е урăх мелпеТăван çĕршывпа тĕнче культурине пысăк тӳпе хывнă К.В. Иванов пурнăçĕпе пултарулăхĕнчи тĕрлĕ саманта е унăн хайлавĕсенчи геройсен ĕçне-хĕлне ӳкерсе-сăнласа памалла. Ӳкерчĕксен виçи 20х30 см А-4 форматран пĕчĕк пулмалла мар.

Чăвашла çырнă, компьютерпа пичетленĕ сăвăсемпе эссесене тата ӳкерчĕксене **2015 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕччен çак адрессемпе йышăнаççĕ:**

428000, ЧР, Шупашкар хули, Воробьев композиторсен урамĕ, 6 çурт, Чăваш наци конгресĕ, телефон:62-35-61. ЧНК электрон адресĕ: **conqress21@mail.ru**

428019, ЧР, Шупашкар хули, Яковлев проспекчĕ, 13 çурт, 7 хут, «Тантăш» хаçат редакцийĕ, телефонсем: 28-83-86, 28-85-69. Редакцин электрон адресĕ: **tantas@list.ru**

Çамрăк авторсен конверт тата ĕç çинче «К.В. Иванов конкурсне» тесе палăртмалла, ĕçĕн питĕнче (титулĕнче) хайсен хушаматне, ятне тата ашшĕ ятне, хăш шкулта тата миçемĕш класра вĕреннине, районпа (хулапа) республика (область) ятне чăвашла та вырăсла тата пултарулăх ăмăртăвне хатĕрлекен вĕрентекенĕн хушаматне, ятне тата ашшĕ ятне тата кĕсье телефон номерне кăтартса çырмалла.

Жюри конкурс çĕнтерӳçисене уйрăммăн икĕ ушкăнра (8-9 тата 10-11-мĕш классенче) палăртать, вĕсен ячĕсене«Тантăш» хаçатра пичетлет.

Çĕнтерӳçĕсене тата вĕсене хатĕрленĕ вĕрентекенсене дипломсем тата парнесем парса чысласçĕ. Илемлĕх енчен лайăх та паха хайлавсене «Тантăш» хаçатпа«Самант» журналта пичетлеççĕ тата радио хумĕпе янăратаççĕ.

***Конкурс йĕркелӳçисем – Юлия АНИСИМОВА, Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн пайташĕ тата Геронтий НИКИФОРОВ, Чăваш наци конгресĕн вĕренӳпе ăслăлăх комитечĕн пайташĕ, «Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕ» общество организацийĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсен секцийĕн председателĕ.***

**ПУЛТАРУЛЛИСЕМ**

## «Эп те пулнăччĕ слетра...»

Иртнĕ çулхи апрель уйăхĕнче эпир "Тантăш" хаçатăн хастар авторсене çамрăк корреспондентсен слетне чĕннĕччĕ. Вĕсен йышĕнче Муркаш районĕнчи Шетмĕпуç шкулĕнче вĕренекен Галя Максимова та пурччĕ.



– Пĕр кунхине физкультура учителĕ Сергей Тимофеевич пирĕн класа кĕчĕ те мана «Тантăш» кăтартса: «Ку эсĕ мар-и?» – терĕ. Эпĕ çамрăк корреспондентсен йышне лекнине мана чи малтан вăл пĕлтерчĕ. Унта çырнине вуласан, çамрăк корреспондентсен слечĕн делегачĕсен хушшинче эпĕ те пуррине, манăн та каймаллине пĕлсен савăнсах кайрăм, – аса илет Галя. – Вара Ирина Валентиновнăпа çула тухрăмăр..

Слетра Гальăна питĕ килĕшнĕ. Вăл унта Хĕрлĕ Чутай хĕрачипе Сашăпа та туслашма ĕлкĕрнĕ. Кайран хĕрачасем лагерьте те пĕрлех каннă. Халĕ те çыхăну татăлман-ха, интернетра пĕр-пĕрин патне çыру шăрçалаççĕ.

Гальăн çывăх тусĕ – Диана Волкова. Хĕрачасен пĕрлехи хавaслă самант чылай. Пĕр-пĕрне кӳрентерни те пулкаланă, çапах туслăх вĕсемшĕн пуринчен те пĕлтерĕшлĕрех.

Тепĕр слета та хутшăнма ĕмĕтленет Галя. Çавăнпа тĕрлĕрен темăпа сăвă çырса хаçата сĕнет.

## Районти «Чи лайăх юрăç»



Вĕренӳре малта пыраканнисенчен пĕри – çиччĕмĕш класри Яна Абрамова. Предмет олимпиадисене хастар хутшăнать вăл. Вырăс чĕлхипе тăтăшах çитĕнӳ тăвать. Лара-тăра пĕлменскер физкультура предметне те кăмăллать. Волейболла питĕ ăста вылять, команда ятне ямасть. Район ăмăртăвĕнче çĕнтерес тесен хатĕрленме те вăхăт кирлĕ. Çавăнпа та хĕрача юлташĕсемпе пĕрле уроксем хыççăн ятарласа юлаççĕ, тренировкăна васкаççĕ.

Малтан Яна ташă кружокне çӳренĕ, ăсталăхне туптанă. Халĕ вара килте илемлĕ кĕвĕ ярать те çĕнĕ хусканусем шухăшласа кăларма тăрăшать. Юрлас енĕпе те пултаруллă вăл. Ахăртнех, вĕрентекенсем хавхалантарни те пулăшса пырать. Районти конкурссене хутшăнса «Чи лайăх юрăç» ята та тивĕçнĕ. Илемлĕ вулакансен ăмăртăвĕнче вара иккĕмĕш вырăна тухнă.

Шкул пурнăçĕнче Яна пысăк вырăн йышăнать. Вăл – уяв йĕркелĕвĕн министрĕ. Хаваслăха нихăçан çухатман хĕрача пур мероприятие те савăнăç сĕмĕ кӳрет, çавăнпа ăна тантăшĕсем тата ытларах юратаççĕ.

## «Таса мар вăйсем чăваш юрринчен хăраççĕ тет»

Пĕчĕкрех чухне такам та пулас килетчĕ: юрăç та, тухтăр та, анне хыççăн физкультура учителĕ те... Халĕ вара журналист ĕçне алла илес ĕмĕтпе çунатланса пурăнатăп, – тет Диана Волкова.



Пĕррехинче Диана мунча кĕме кайсан хĕресне хывса хунă, кайран ун çинчен мансах кайнă. Килне таврăнсан аса илнĕ-ха, анчах тĕттĕм мунчана тепĕр хут кайма хăранă. Иккĕмĕш кунне ăна тĕлĕк тĕлленнĕ.

– Ман пата Олегпа Денис пиччесем утаççĕ, вĕсем хыççăн усалсем пыраççĕ пек. Эпĕ çав таса мар вăйсем чăваш юрринчен хăраççĕ тенине илтнĕччĕ. Тăванăмсене юрлама хушрăм. Çапла вăранса кайрăм, – хăраса аса илет Диана.

Унтанпа вăл хĕресне вĕçертмест, ăна çухатасран шутсăр хăрать.

Диана пурнăçри кашни самантпа савăнма пĕлет. Иртнĕ çул Йӳçкассине çĕрулми пуçтарма кайнине те йăл кулăсăр аса илеймест. Упалене-упаленех ĕçленĕ шкул ачисем. Пушă вăхăтра чун каниччен вылянă. Çакăн пек самантра чунра мĕн тери хавaслă пулнине кашниех ăнланать ĕнтĕ.

***Лариса ПЕТРОВА.***

Муркаш районĕ,
Шетмĕпуç шкулĕ.

# Тĕрлĕрен: вула та пĕл

## Купăс калать хура хур, курман пулсан кайса кур

Анук аппа кĕçĕн ывăлне, манран пилĕк çул аслă Кавăрлене, çав тери ачаш пăхать.

– Çичĕ хĕр çуратнă хыççăн ак çак кĕçĕнни чи юратни пулса тăчĕ, – тет вăл час-час пепкине пуçĕнчен шăлса.

Чăн та, ачаш пулнипе ывăл пĕр ĕç тĕлне пĕлмест. Кунĕпех сенкер экран умĕнче килент, мультфильмсем пăхса хаваслантать. Вуннăра пулин те кĕреçе-сенĕк тытма чухлаймасть апăрша. Пахчара ĕçлесе пилĕкне авнине нихăçан та курман ăна.

Пĕр кунхине уява Кавĕрлен çуралнă кунне чĕнчĕç. Парне илсе аннепе хаваспах каçрăмăр. Ара, кўрше саламламаллах ĕнтĕ. Ырă та хитре сăмахсем каламаллах!

Çапла сĕтел хушшинче чиперех лараттăмăр, сасартăк Кавĕрле мăкăртатма тытăнчĕ.

– Анне, мĕн пĕçерсе тултарнă эсĕ? Кукăлĕ те кукăль пек мар, яшкине те тăвар каламан. Çăкăрăн та тути çук! Кăçал мĕн чухлĕ панулми пулчĕ, çавсене мĕншĕн хĕле валли хатĕрлемерĕн? Тĕрлĕ çырла пухса холодильнике хунă пулсан паян унран тутлă компот вĕретнĕ пулăттăмăр, – терĕ хайхискер пĕтĕм çын умĕнче.

– Ачам, сĕтел çинче йăлт пур-çке, тата мĕн кирлĕ сана? Эсĕ çеç тиркесе лараканни кунта, – шалт тĕлĕнчĕ амăшĕ.

– Мана холодильникре шăнтса хатĕрлени кирлĕччĕ...

Эх, эпĕ чăтаймарăм, ура çине тăрсах:
– Кавĕрле, Кавĕрле!
Кĕпĕр-кĕпĕр çўрерĕн,
Картасенчен тухмарăн,
Сад улмине пĕтертĕн,
Симĕс хăяр хăвармарăн,
Йўçĕ сухан çимерĕн.
Çакă пулать хăш ачи?
Чи вăрăмми, çинçешки,
Чи кахалли, наянни –
Кавĕрле!

Пурте шăпланчĕç. Анук аппа алă çупрĕ.

– Ку сăвви питĕ килĕшрĕ. Шăп та лăп пирĕн Кавĕрле валли. Ара, камăн тутлă çиес килет, хăй тутăр кирлине, – терĕ кĕскен.

...Халĕ Кавĕрле сатурланнă. Амăшне пулăшать. Акă паян та кунĕпех картишрен урама юр туртрĕ. Ĕçлемесĕр нимĕн те пулмассине чухларĕ ахăртнех.



Кукамисен ялĕнче,
Кукаçисен кассинче,
Купăс калать хура хур,
Курман пулсан кайса кур.

Мăйăр татас – тĕшши çук,
Уйран уçлас – çу ўкмест,
Ят парсан та ят тухмасть.
Сик тух, Марине!



Вут çунать, вут çунать.
Сăмавар вĕрет, вĕрет.
Çапла кирлĕ, çапла кирлĕ,
Асатте, эс мĕн ĕçлетĕн?



*Элиза ВАЛАНС хатĕрленĕ.*

## *Ахаль иртрĕ тетĕр-и? Çук!*



Асра юлчĕ-и Лаша çулĕ? Паллах! Ку çул тата мĕнпе савăнтарĕ-ши пире Качака? Пĕлместĕп, анчах та хуть те мĕнле çулталăк та вăй хумасăр килменнине аван чухлатпăр эпир, аслисем. Çавăнпа та манăн çакна шкул ачисенчен ыйтса пĕлес шухăш çуралчĕ. Акă мĕн хуравлаççĕ шăпăрлансем.

**Даниил ЧЕРНОВ (5 класс):** Çак çул, чи малтанах, вĕренўпе асра юлчĕ. Эпĕ тата лайăххах вĕренмеллине ăнланса илтĕм. «Тăрăшсан çĕнтерме пулатех ĕнтĕ», – тесе хам ума тĕллев лартрăм. Манăн дневникре «4» паллă ан хуçалантăр, «5» çеç пултăр. 2014 çулта эпир çемьепе Хусана кайса куртăмăр. Шупашкар та хитре-ха, сăмахăм çук. Кўршĕсен тĕп хулинче те тĕлĕнмелли темĕн чухлех. Уйрăмах Аквапаркра пулни питĕ хавхалантарчĕ, савăнтарчĕ. Туссене те унта çитсе курма сĕнтĕм.

**Рома РОМАНОВ (5 класс):** Эпĕ çуллахи каникула чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Мĕн кăна тумастăп пуль çак вăхăтра! Ачасемпе пулла çўретĕп, шыв хĕрринчен кайма пĕлместпĕр, ўт-пĕве писĕхтеретпĕр, çав вăхăтрах атте-аннене те пулăшатпăр. «Салют» лагерьте каннине нихăçан та манмăп, унта паллашнă ачасемпе халĕ те çыхăну тытатпăр. Кăçал уйрăмах çемьепе пĕрле Сăр хĕррине кайни, шывра пысăк пулăсем тытса шўрпе пĕçерни, вăйă выляни, шашлăк туни асра юлчĕ. Çавăнпа та мана 2015 çул та япăх пулассăн туйăнмасть. Спортра та, вĕренўре те пысăк çитĕнў тăваса шанатăп.

**Вова МИХЕЕВ (5 класс):** Маншăн чи асра юлнă кун вăл – çурла уйăхĕн 17-мĕшĕ. Мĕншĕн тесен эпĕ ун чухне тĕп хуламăрăн кунне уявланă çĕре çитсе куртăм. Атăл хĕрринче «Витязь» самолетсем вĕçни, вĕсем сывлăшра темĕн тĕрлĕ те çаврăнни питĕ тĕлĕнтерчĕ. Çак пулăм пирки чылайччен шухăшласа çўрерĕм. Пур летчик та çапла вĕçеймест вĕт. Ун пек пулма манăн питĕ нумай вĕренмелле. Ăслă-тăнлă тата спортпа туслă пулни çеç çакăн пек çитĕнў тума пулăшать.

**Кирилл АРТЮШКИН (5 класс):** Интереслĕ пулăмсене эпĕ блокнота çырса пыма тăрăшатăп. Акă ман умра çултаlăк тăршшĕпе ăçта пулнă, кампа курнăçнине уçса паракан самантсем...

Пĕрремĕшĕ: аттепе Сăр шывĕ хĕрне кайсан пуçласа хам тĕллĕн кимĕпе ишни. Иккĕмĕшĕ: хуткупăс калама вĕренни. Халĕ эпĕ пушă вăхăтра купăса алăран вĕçертместĕп тесен те йăнăш пулмĕ. Çĕнĕ çемĕсене вĕреннĕçемĕн вĕренес килет.

Хуткупăса юратасси вара çапла пуçланчĕ. Пĕррехинче Татьяна Васильевна музыка инструменчĕсем çинчен вĕрентнĕ чухне: «Сирĕн килте купăс калакан пур-и? Камăн та пулин хуткупăс калама хăнăхас килет-и?» – терĕ пире. Эпĕ вăтанса алă çĕклерĕм. «Манăн асатте хуткупăс калать, эпĕ пултарайăп-ши?» – тесе шухăшларăм. Татьяна Васильевна мана çак инструмента пачĕ те: «Вĕрен, вĕреннине йăтса çўрес çук», – терĕ. Эпир «Пĕчĕк çеç путене» фестивальте район чысне хўтĕлеме тĕп хулана кайрăмăр, Хисеп хучĕпе таврăнтăмăр. Çакă савăнăç мар-и вара?

Манăн атте художник. Унăн аллинче ĕç вĕресе çеç тăрать. Вăл йывăçран мĕн-мĕн кăна касса кăлармасть пулĕ! Ун çине пăхатăп та тĕлĕнсе пĕтерейместĕп. Çавăнпа та манăн 2015 çулта купăс калама тата лайăхрах вĕренсе ял çыннисене савăнтарас килет. Йывăçран тĕрлĕ кĕлетке, кўлепе каскаласа ăсталакансен конкурсне хутшăнса та çĕнтересчĕ!

**Аня ЕРОФЕЕВА (5 класс):** Мана анне яланах: «Интереслĕ самантсене астуса юлмалла», – тет. Иртнĕ çул мĕнпе асра юлчĕ-ха? Паллах, кĕçĕн класран вĕренсе тухнипе, хамăн пĕрремĕш вĕрентекенпе сывпуллашнипе. Пире Ирина Семеновна Михеева вулама, çырма, шутлама вĕрентрĕ, атте-аннене юратмаллине, Тăван çĕршыва юрăхлă çын пулмаллине тăтăшах аса илтерчĕ. Халĕ эпир пиллĕкмĕш класра вĕренетпĕр, нумай вĕрентекене тăнлатпăр. Çапах та пĕрремĕш учитель сăмахĕсене манса каймăп, вĕсене хуть те хăçан та шута илĕп.

*Татьяна ГОРБУНОВА, вĕрентекен.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Мăн Этмен шкулĕ.

# Николай ЫДАРАЙ: «Ытларах ачасем валли çырма юрататăп»



Çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май

Тивĕçлипе каланă сăмах. Пултарулăхне пĕтĕмпех вĕтĕр-шакăра халалланă. Хайлавĕсене вуласа шăпăрлан чĕрчуна, кайăк-кĕшĕке, чечеке уйăрать. Ĕçе, йĕркене хăнăхать. «Савăк вăхăт» кĕнекине мĕн пĕчĕкрен ăша хывнăран авалхи ырă йăла манăçмасть. Вăл пухса хатĕрленĕ «Сăпка юррисем» кĕнеке чăвашлăха упрать.

Ачапчана вăйă, тупкав меслечĕпе илĕртсе хавхалантарать. Капла вулас туртăм ÿсет.

Юрий Кудаков композитор унăн «Çĕнĕ Шупашкар», «Çук! Çук! Çук!», «Туссем, килĕр хăнана», «Парнелесчĕ», «Пĕчĕк ывăлăм» сăввисене кăмăлласа юрă кĕвĕленĕ.

## Амăшĕ – Хвекле – Кĕрекаç хĕрĕ

«Хусантан ятуллă кăна каччă çитнĕ», – хавха тухрĕ Муркаш тăрăхĕнчи Кĕрекаç ялĕнче. Ах, мĕн çăмăлпа-ши? Чиркÿ çынни тет-и, чиркÿ ĕçĕпе пулинех. «Вăл вунсаккăрти Хвеклене качча илнĕ», – хăлхана кĕчĕ тепĕр хыпар. «Чăваш вăл, Каçал енчи Явăш ялĕнчен. Хусанта тĕпленнĕ», – калаçрĕ кÿршĕ-аршă.

Хвекле тин кăна Цветковаччĕ, халĕ ĕнтĕ Розова. Ашшĕ-амăшĕ çамрăк мăшăра пиллерĕ те инçе çула ăсатрĕ.

Хусана çитсенех ăшă йăва та тупăнчĕ. Пÿлĕм уйăрса пачĕç. Шăкăл-шăкăл пурăнаççĕ. Вырăсла пĕлменни касать те ĕнтĕ, упăшка вĕрентнĕрен аптрасах каймасть. Çăкăр илмелле чухне çул тăршшипе «хлеб.., хлеб...» тесе пырать, манасран.

Ывăл çуралчĕ. Толя ят хучĕç.

Телее Пĕрремĕш тĕнче вăрçи татрĕ. Упăшка унта хыпарсăр çухалчĕ. Ют çĕрте пĕччеңи йывăр, Явăшалла çул тытрĕ.

## Явăшра

Ачипе иккĕшне никамах та хавассăн кĕтсе илмерĕ. Кашнийĕн хăйĕн нуши, вăрçă пырать. Çын патĕнче пурăнчĕ. Пыра-киле тепре качча кайрĕ. Иккĕмĕш упăшкаран çуралнă ывăла Коля ят хучĕç. Ашшĕ ача иккĕре чухне чирлесе вилчĕ.

Шкула техничка вырнаçрĕ, унтах пурăнчĕ. Ачасене аван пăхрĕ. Çил-тăманра аякрисене ямарĕ, çĕр каçма хăварчĕ.

Толя учителе вĕренсе тухрĕ. Тăван ялта ачасене вĕрентрĕ. Авланчĕ. Çурт лартрĕ. Амăшĕне шăллĕ ун патне пурăнма куçрĕç. Кĕçех Анатолий Антипаторовича çара илсе кайрĕç. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланчĕ. Аслă ывăл унта хыпарсăр çухалчĕ. Арăмĕпе хĕрĕ тăлăха юлчĕç. Аслин сăввисене пухса кĕçĕнни «Ĕмĕт татăлчĕ...» кĕнеке кăларчĕ. Хуплашкара Анатолий Розов тесе палăртнă, сăнĕ те пур.

## Кĕçĕнни

Николай Васильева (писателĕн чăн хушамачĕ) военкомат вăрçа вуннăмĕш класран ăсатрĕ. Вĕсен çар чаçĕ Мускав çывăхĕнчи Томилино хулинче тăчĕ. Николай Васильевич писарьте тăрăшрĕ.

Вăрçă хыççăн Комсомольски районĕнчи тĕрлĕ учреждение вăй хучĕ.

Хусана куçса кайрĕ. Унта вăтăр виçĕ çул пурăнчĕ. Заводра ĕçленĕ хушăра педагогика институтĕнчен вĕренсе тухрĕ, кĕнекесем кăларчĕ. Пенсие кайсан Çĕнĕ Шупашкара килсе тĕпленчĕ.

Николай Ыдарай 2005 çулхи кăрлач уйăхĕн пĕрремĕшĕнче вилнĕ. Ăна Çĕнĕ Шупашкарта пытарнă. Вăл пурăннă çурт çине Асăну хăми çакнă.

«Вилес пулсан мĕн юлать?
Çак ыйту –
Чи хăватлă ырату», – пăшăрханнă Николай Васильевич.

Ырă ячĕ, кĕнекисем юлнă. Вăл çырнисене ачасем питĕ хапăллаççĕ. Çакă чуна ăшăтса тăрать.

*Галина ЕЛИВАНОВА,*
*К.В.Иванов ячĕллĕ Литература музейĕн наука аслă сотрудникĕ.*

**СĂНÜКЕРЧĔКРЕ:** Николай Ыдарай писатель.

ШУХĂШ

# Анне пурри – телей



**«Хĕрача амăшĕ çумне çыпçăнать, арçын ача – ашшĕ патне», – тесе ахальтен каламан-тăр. Паллашар-ха çиччĕмĕш класра вĕренекенсен сочиненийĕсенчи шухăшсемпе. Çакăн пек йĕркесем шăрçалаççĕ вĕсем хăйсен юратнă çыннисем çинчен. Кашнинчех вĕсен ăшă-ăшă туйăмĕ палăрать.**

**Марианна СОЛОВЬЕВА:** «Аннен чăтăмлăхĕнчен, ĕçченлĕхĕнчен тĕлĕнетĕп. Вăл çавăн пек маттур çын пулнишĕн хĕпĕртетĕп. Аннене кулянтарас мар тетĕп. Уроксенче лайăх паллăсем илсе ăна яланах савăнтарасшăн. Ытла та кăмăллă, ырă вăл. Эпĕ ăна питĕ юрататăп, нумай çул пурăнма яланах сывлăхлă пулма сунатăп».

**Камиль ВАХИТОВ:** «Эпир йăмăкпа иксĕмĕр те шкултан таврăнсан аннене пулăшатпăр. Унран ĕçлеме хăнăхса пыратпăр, ăна тĕслĕх вырăнне хуратпăр».

**Августинăпа Кристина ЛЕОНТЬЕВĂСЕМ:** «Пирĕн анне – чи лайăххи, чи илемли. Вăл пĕçернĕ апат мĕн тери тутлă, кукăлĕсем кăпăшка! Чăн-чăн алăсти пирĕн анне. Мĕн кăна çыхмасть-ши тата? Илемлĕ кофта, калпак, чăлхи-нускийĕсем – пурте эрешлĕ, илемлĕ».

**Ильнар ТИМЕРБУЛАТОВ:** «Пÿрте чупса кĕретĕп те куçпа аннене шыратăп. Вăл çук пулсан унта тăрас та килмест. Пур чухне хĕвел пăхнă пекех туйăнса каять. Анне, эсĕ чăннипех те хĕвел».

**Гелюсе КАМАЛЕТДИНОВА:** «Мĕн тери телей – анне пурри. Маншăн вăл çул маякĕ пекех, çухалса кайма, йăнăшма памастех. Анне сăмахĕ, вĕрентĕвĕ пур çынна та кирлĕ. Эпĕ ун умĕнче пуçа таятăп».

**Андрей ТЕЛЬМАН:** «Аннене яланах мĕнпе те пулин савăнтарма тăрăшатăп. Ăна пĕрре те çăмăл маррине ăнланатăп. Вăй çитнĕ таран пулăшатăп».

**Андрей ВОРОБЬЕВ:** «Эпир аттепе аннен виççĕн. Пурте ывăл. Çавăнпа та урайне те, савăт-сапине те хамăрах черетпе çăватпăр. Анне пире пурне те пĕр пек юратать».

**Настя СОРОКИНА:** «Анне мана пĕрре çесе пиккенетĕп...»

**Рамзиля АЛЕЕВА:** «Тусăмсем, тантăшăмсем! Аттепе аннене хисеплер! Вĕсемшĕн эпир яланлăхах ача, пĕчĕк чухне те, ÿссе çитсен те. Пирĕн кашни утăм, кашни ĕç – анне умĕнче. Тĕрĕс утăмсем çеç ăна савăнăç кÿрĕç. Çакна манар мар».

**Диана САНДЫРКИНĂН** амăшĕ те питĕ ырă кăмăллă, никама та усал сунмасть: «Вăл йăлтах ăнланать, пире ялан каçарать. Пур ĕçе те тирпейлĕн, тăрăшса тăвать. Пире те пуçланă ĕçе вăхăтра, тĕплĕн тума вĕрентет. Питĕ юрататăп эпĕ аннене».

Акă **Коля КУРМАНАЕВ** та еплерех хĕпĕртет юратнă амăшĕ юнашар пулнишĕн: «Анне шăллăма кашни каç сăпка юрри юрласа çывăрттарать, юмахсем каласа парать. Эпĕ те вара юнашар йăпшăнса кĕрсе выртатăп та шăллăм çумне, хăш вăхăтра ыйха путнине сисместĕп. Тĕлĕкре те аннене куратăп. Мана вăл унта та хăйĕн çепĕç аллипе ачашлать».

**Фагиля САЛЕЕВА:** «Анне сăнарĕ ырăлăхпа, ăшăлăхпа палăрать. Кÿрентерес марччĕ ăна нихăçан та. Яланах асра тытасчĕ унăн юратăвне».

*Светлана КУЛАКОВА,*
*вĕрентекен.*

Патăрьел районĕ,
Ыхра Çырми шкулĕ.

# Чăваш волейболĕ

**Пирĕн республикăра хăçан аталанма пуçланнă-ши çак вăйă? Мĕнле шухăшлатăр? Ку хуравсене тата волейболпа çыхăннă ытти кăсăк фактсене тишкерер-ха.**

Çакă халĕччен те паллă мар. Чăваш Республикин волейбол спорчĕн федерацийĕн пĕрремĕш секцийĕн физкультурăпа спорт комитечĕ 1953 çулта ĕçлеме пуçланă тесе ăнлантараççĕ.

1946 çулта Чăваш Ене Мускаври «Динамо» хĕрарăмсен волейбол ушкăнĕ килнĕ. Вĕсемпе паллă волейболистка Александра Георгиевна Чудина та пулнă.

1962 иккĕмĕш çулта Йошкар-Олара иртнĕ волейболистсен зонăри ăмăртăвĕсене чăваш студенчĕсем хутшăннă.

1963-1969 çулсенче Электроаппарат завод филиалĕн «Энергия» арçынсен волейбол команди «Труд» физкультурăпа спорт обществинчи финал вăййисене хутшăннă.

1984 çултан пуçласа 2009 çулччен волейбол федерацийĕн президенчĕ Владимир Георгиевич Матижев пулнă.

2010 çулхи декабрь уйăхĕнчен çак ĕçе Николай Михайлович Герасимов пурнăçлама пуçланă.

## «Ăсталăха кашни кун туптамалла»



Кунта пĕлӳ илекенсем кĕçĕн класрах спортпа туслашаççĕ. Мĕн шкултан вĕренсе тухиччен пырать ку туслăх. Малашлăхра нумайăшĕ чăн-чăн спортсмен та пулĕ-и, тен?

Пикесем те физкультура урокне пуринчен ытла кăмăллаççĕ. Ара, волейбол тесен каçсах каяççĕ-çке вĕсем. Шкулăн пĕрлештернĕ волейбол командинче хастаррăн выляканскерсем яланах ăмăртура тупăшма хатĕр.

Ксюша Александрова, Настя Ильина, Оля Антонова, Олеся Миронова, Света Иванова, Дианăпа Ксюша Скворцовăсем, Настя Николаева тата Лиза Канева уроксем хыççăн тӳрех спортзала çул тытаççĕ. «Вăйă ăсталăхне кашни кун туптамалла. Вара çĕнтерӳ пире нумай кĕттермĕ», – теççĕ хĕрсем хавхалануллăн. Пур ăмăртăва те тĕплĕн хатĕрленеççĕ вĕсем. Ку ĕçре пикесене Надежда Николаевна Васильева тренер пулăшать. Çĕнĕ хусканусем кăтартать, тĕрлĕ сĕнӳсем парать. Волейбол команди тупăшуран çĕнтерӳпе таврăнсан мухтать, малалла ăнтăлма хавхалантарать. «Выляса ярсан вара?» – тесе ыйтсан: «Лăплантарать. Тепрехинче ăнăçу пирĕнпе пуласса ĕнентерет», – хуравларĕç пĕр харăс хастарсем.

Чи малтанахи тренерне, Олег Иванович Васильева та манмаççĕ вылявçăсем.

– Вăл питĕ лайăх ăнлантаратчĕ. Волейбол вăййин вăрттăнлăхĕсене шăпах вăл уçса пачĕ пире. Эпир Олег Ивановича пысăк тав сăмахĕ калатпăр, – ăшă сăмахсемпе аса илеççĕ ачасем вĕрентекенне.

Тренерсен ăста вĕрентĕвне, вылякансен тăрăшулăхне пула шкулăн пĕрлештернĕ волейбол командин пухмачĕнче икĕ ылтăн, пĕр пăхăр, пĕр кĕмĕл медаль пур.

Республика шайĕнчи ăмăртура та малти вырăна тухнă. Волейболла çеç мар, баскетболта та ăста çак пикесем. Арçын ачасемпе тан мечĕке карçинккана ывăтса кĕртме пултараççĕ.

Спортра та, вĕренӳре те, обществăлла ĕççенче те маттурлăхĕпе палăрма ĕлкĕрнĕ вĕсем. Кашниех мĕнпе те пулин уйрăммăн та кăсăкланать. Оля, сăмахран, сăвă çырать. Ӳкерме те кăмăллать. Пултарулăхне тĕрлĕ енлĕн аталантарма шут тытнăскер интернетран уроксем илсе гитарăпа та калама вĕренет.

Тăватă çул музыка шкулне çӳресе баян ăста калама вĕреннĕ Ксюша вара питĕ пуçаруллă хĕрача. Ахальтен мар-тăр çулсерен иртекен «Зарница» вăййăра ăна кашнинчех капитан пулма шанаççĕ. Çаврăнăçуллăскер хайĕн командине тĕрлĕ пăтăрмахсене çĕнтерсе малти вырăна тухма кăмăлтан хавхалантарать.

Лиза та юрă-кĕвĕпе туслă. Вăл та музыка шкулне чылай вăхăт çул такăрлатнă. Тăрăшни куçкĕрет. Баян тата фортепьяно ăста калать вăл. Тен, малашнехи пурнăçне те юрă-кĕвĕпе çыхăнтарĕ. Сывлăх çеç пултăр. Куншăн вара Лиза тăрăшать. Çăмăл атлетикăпа, хăвăрт утассипе, ишессипе кăсăкланать. Ăмăртусене те хаваспах хутшăнать. Хăй Сыктывкар хулинчен куçса килнĕ пулсан та чăвашла чип-чиперех калаçать. Чăннипех тĕлĕнтерчĕ вăл пире. «Чăвашла лайăх калаçма мĕнле вĕрентĕн?» – тесен вăл: «Тантăшсем пулăшаççĕ», – терĕ йăл кулса.

Çак хастарсен йышĕ туслă пулни, пĕр-пĕрне пулăшни ыттисемшĕн те ырă тĕслĕх вырăнĕнче. «Тантăш» вулаканĕ сене те вĕсем спортпа туслă пулма, лайăх вĕренме, кĕнеке нумай вулама сунаççĕ.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Канаш районĕ,
Пайкилт шкулĕ.



**ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ**

## Кăштах историрен

1895 çулта Уильям Дж. Морган çамрăк христиансен ассоциацисен инструкторĕ баскетбол, бейсбол, теннис тата гандбол вăййисен элеменчĕсене хутăштарса хайĕн юлташĕсем валли çĕнĕ вăйă шухăшласа кăларнă. Волейбола пуçарса яраканни шăпах вăл шутланать. Ун чухне ăна mintonette тенĕ.

Морган теннис сеткине урайĕнчен 196 сантиметр, вăтам пӳллĕ çынран кăштах çӳлерех вырнаçтарнă. Пĕрремĕш хут çак вăййа халăха кăтартнă чухне: «Вылякансем мечĕке сетка çийĕн унталла та кунталла ывăтнине (to volley) «волейбол» (volleyball) тесен те юрать», – тенĕ тахăшĕ. Ку Моргана та тивĕçтернĕ.

1896 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнче Спрингфилд хулин Колледжĕнче пĕрремĕш хут волейбол вăййине вылянă. 1900 çулта вара ун валли ятарлă мечĕк шухăшласа кăларнă. 1964 çулта çак спорт тĕсне Токио хулинче иртнĕ Олимп вăййисен программине кĕртнĕ.

## Паллă вылявçăсем

2000 çулта пĕтĕм тĕнчери волейбол федерацийĕ XX ĕмĕрти чи вăйлă вылякан волейболистсене палăртас тĕлĕшпе ыйтăм ирттернĕ. Хĕрарăмсенчен унта Лан Пинь (Китай), Инна Рыскаль (СССР), Регла Торрес (Куба) тата Фернанда Вентурини (Бразили) кĕнĕ. Арçынсенчен вара пурĕ саккăрăн палăрнă: Петер Бланже (Нидерланд), Томаш Вуйтович (Польша), Карч Кирай (АПШ), Уго Конте (Аргентина), Йозеф Мусил (Чехословаки), Кацутоси Нэкода (Япони), Константин Рева (СССР) тата Ренан Даль Зотто (Бразили).

1990-1998 çулсенче тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнса палăрнă, вицĕ хут тĕнче чемпионĕ Италин пĕрлештернĕ арçынсен командине тата 1960-1965 çулсенче вылянă Японин хĕрарăмсен командине 20-мĕш ĕмĕрте чи лайăх выляканнисем тесе йышăннă.

Сергей Тетюхин волейбол историне Олимп вăййисенче чи нумай медаль çĕнсе илнипе кĕрсе юлнă. Раççей вылявçи 2000-2012 çулсенче пĕр ылтăн, пĕр кĕмĕл, икĕ бронза илнĕ. Хĕрарăмсенчен Ана Ибис Фернандес кубинка (вицĕ ылтăн, пĕр бронза (1992-2004)) тата Совет Союзĕн вылявçи Инна Рыскаль (икĕ ылтăн, икĕ кĕмĕл (1964-1976)) палăрнă.

## Пĕрлĕхре – вăй

Пирĕн туслă волейбол команди районти пĕр ăмăртуран та юлмасть. Кăтартăвĕсем те савăнтараççĕ. Иртнĕ çулта пирĕн ушкăн малти вырăна ултă хутчен йышăнчĕ, вĕсенчен тăваттăшĕ – пĕрремĕш.

Паллах, кашни командăрах лидер пур. Пирĕн те çаплах. Вăл – Наталия Егорова. Лайăххах хатĕрленме тата ăсталăхне пысăклатма Наташа Шупашкара çӳрет. Малашне вăл професиллĕ командăра вылясшăн, çавăнпа тăрăшсах пултарулăхне туптать.

Герман Петрович Соколов тренер пире волейбол техникине вĕрентет çеç мар, хавхалантарма та пĕлет. Кашни каçах спортзалта пуçтарăнса ăмăртăва хатĕрленетпĕр. Арçын ачасене хирĕç выляса вĕсене час-часах çĕнтеретпĕр.

Волейбол выляканесене çирĕп пĕрлĕхе пуçтарать. Кунта пĕрлехи çĕнтерӳшĕн кĕрешмелле. Команда ăнăçăвĕ вара хавхалану тата савăнăç кӳрет!

Пурте волейболла выльăр, спортпа туслă пулăр!

*Полина ТУРГАНОВА.*

Куславкка районĕ,
Энтри Пасар шкулĕ.



Тантăш 9
1 №, 2015, январь, 15

# Партизансем хушнипе

Л.ЛЕВКОВА



## Каçхи хăна

1941 çулхи кĕркунне пек савăнăçсăррине, канăçсăррине Виктор Пашкевич курманччĕ-ха. Шкул çинчен шухăшламалли те çук, фашистсем хупрĕç ăна. Березинăна пулă тытма, вăрмана мăйăр татма кайма та юрамасть. Хуларан тухма пачах чарнă, унсăрăн вилĕмпе куçа-куçăн тĕл пулăн. Вулама кĕнеке те çук.

Пĕртен-пĕр савăнăç – Алесь Климкович патне кайса килесси, унпа калаçасси, фронтри пулăмсем çинчен мĕн пĕлнине пĕрле пайлασси. Анчах каçхине хулара çўреме юрамасть, патруль тытсан çавăнтах персе пăрахать. Çавăнпа кăнтăрла тухса юлмалла.

Эх!.. Вăрçăччен мĕн тери лайăхчĕ! Ăçта каяс килет, çавăнта кай, мĕн тăвас килет, çавна ту.

Фашистсене тăван çĕр çинчен епле хăваласа ямалла-ши?

Виктор çывăрма хатĕрленнĕччĕ ĕнтĕ. Сасартăк чўречерен такам асăрханса шаккарĕ. «Туйăнать çеç пуль», – шухăшларĕ арçын ача. Анчах çав сасă каллех илтĕнчĕ.

– Анне! – Витя амăшĕ патне пычĕ те хулпуççийĕнчен сĕртĕнчĕ. – Такам шаккать.

– Илтетĕп, ывăлăм. Кайса уç. Ют çапла асăрханса шаккас çук, тўрех кĕмсĕртеттерме пуçлать. Ку хамăр çынах.

Виктор алăк çеĕклне тĕртрĕ. Пўрте арçын кĕчĕ. Алăк урати урлă каçсанах чўречесене карса лампа çутма ыйтрĕ. Каланине пурнăçласан амăшĕ çак çынна палласа илчĕ:

– Андрей Константинович! Чĕрĕ, сывă!

Виктор та арçынна палларĕ. Ку Андрей пичче, Хĕрлĕ Çар командирĕ. Вăрçăччен вăл вĕсен хваттерĕнче пурăннăччĕ. Халĕ ун çинче ни çар тумĕ, ни хĕç-пăшал çук. Ахаль рабочи пек тăхăннă – телогрейка тата мамăк пир шăлавар. Анчах сăн-питрен те, тыткаларăшĕнчен те вăл унччен хинчен улшăнман.

Каçхи хăна хулари лару-тăру çинчен, ăçта мĕнле часть вырнаçнине, салтаксем тата вĕсен хĕç-пăшалĕ пирки тĕплĕн ăнлантарма ыйтрĕ. Унтан фронтри ĕç еплерех пынине каласа пачĕ. Çăмăл пулман. Анчах Андрей пичче сассинче çирĕп ĕненў сисĕнет.

– Ну, эсĕ вара мĕн тăватăн-ха? – çаврăнчĕ вăл Виктор енне. – Вĕренместĕн пуль-ха?

– Çук. Анчах фашистсем шкула уçсан та эпĕ унта пур пĕрех каяс çук. – Хурав шăппăн, апла пулин те çирĕппĕн янăрарĕ.

– Çапах та мĕн те пулин тумалла. Алă усса лармалла мар.

– Мĕн тумалла-ши, Андрей пичче?

Арçын ачан харсăр та айванрах куçĕсем командира хирĕç пулăшу кĕтнĕн пăхрĕç. Вăл тем тума та хатĕр тейĕн.

– Ĕç нумай халĕ, пысăкки те, пĕчĕкки те, – Виктор çине ыйтуллăн пăхса хуравларĕ Андрей пичче. – Камшăн Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕ пуринчен те хаклăрах, çавăн пек çынсене валли ку ĕçсем...

Шалти сасă арçын ачана çĕкленме хистерĕ.

– Эпĕ – пионер. Эпĕ пурин умĕнче те Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕ пулма сăмах панă!..

...Çав кун Пашкевичсен килĕнче çур çĕр иртсен те çывăрмарĕç-ха. Амăшĕ кухньăра хăна валли апат хатĕрлерĕ, лешĕ вара пўлĕмре Викторпа чылайччен калаçса ларчĕ. Тул çутăлнă вăхăтра вăл сывпуллашнă май Виктора алă пачĕ, лешĕ ăна аслă çын пекех çирĕппĕн тытрĕ те:

– Пурнăçлатăп, командир юлташ! – терĕ.

Пурнăçлатăп. Çак сăмах яваплăх кўрет. Хăйĕн пĕрремĕш çар ĕçне пурнăçлама тăрăшсах хатĕрленчĕ Витя. Темиçе хутчен те разведкăна çўрерĕ.



## Отряда – парне

Пĕтĕмпех хатĕрлесе çитерсен вăл ĕçе пурнăçлама шут тытрĕ. Килтен ир-ирех, тул çутăлнă-сутăлман тухрĕ. Вĕсен пахчи хыçĕнчен йĕплĕ пралуклă карта тăсăлать. Нимĕçсем хăйсен вăхăтлăх хĕçпăшал складне çапла сыхлаççĕ. Арçын ача унта шуçса çитме тĕв турĕ. Пралук айĕнче хушăк пур, Виктора тепĕр енне каçма шăпах меллĕ вăл.

Анчах васкама кирлĕ мар. Чи малтан нимĕç часовойĕн тыткаларăшне вĕренсе çитмелле. Пĕр енне мĕн вăхăт кайнине, тепринче мĕн чухлĕ тытăнса тăнине шутласа кăлармалла. Çавна пĕлсен меллĕ самант тупса пралук айĕнчен тухма пулатех.

...Салтак склад патĕнчен виççĕмĕш хутчен васкамасăр иртсе кукăрта çухалсан Виктор пралук айĕпе калта пек çаврăнăçуллăн шуса тухрĕ те склада ыткăнчĕ. Брезент хĕрне çĕклесен унта вĕр-çĕнĕ винтовкăсен купине курчĕ. Нумай шухăшламасăр пĕрне ярса тытрĕ те каялла шуса тухрĕ. Карта патĕнче çаврăнса пăхрĕ: часовой тин çеç ку еннелле пăрăнчĕ. Арçын ача çамкине тартан шăлса тасатрĕ, аллине кăкăрĕ çумне тытрĕ: чĕри ытла та хытă тапатьçке. Пилĕк минутран Виктор винтовкăна унччен пăхса хунă вăрттăн вырăна пытарчĕ те килне кайрĕ.

Пĕррелĕхе çитĕ. Ку разведка пулчĕ. Ыран вара вăл пĕрре мар, иккĕ, тен, тăватă та çĕклесе тухма тăрăшĕ. Пĕрре кайнă чухне тўрех иккĕшне илĕ. Вĕсене шунăçсемĕн илсе тухма йывăртарах-ха та, темех мар. Фронтра тата йывăртарах пуль...

Тепĕр эрнерен Пашкевичсен патне каллех Андрей пичче килсен Виктор ăна мăнаçлăн пĕлтерчĕ:

– Сакăр винтовка тата патрон ешчĕкĕ!

– Питĕ хăватлă! Маттур. Сана партизанла пысăк тав. Анчах асăрханулла пул.

– Асăрханулла пулăп!

Каллех Виктор кунран-кун хăрушла çулçўреве тухать, çанталăка та пăхса тăмасть. Часовой çакна асăрхамарĕ те.

Хăш чухне килне питĕ ывăнса тата йĕп-йĕпе çитни те пулчĕ. Анчах тул çутăлсанах арçын ача каллех хăйĕн ĕçне пуçăнать. Партизансене хĕç-пăшал питĕ нумай кирлине пĕлет вăл, çавăнпа пĕр самантне те сая ямасть.

Октябрь революцийĕ пулнăранпа 24 çул çитес умĕн Виктор Андрей пиччерен партизансене 25 винтовка, 3 алă пулемечĕ тата 30 граната парса ячĕ. Ку унран парне пулчĕ.

## «Эпир чее, анчах тăшман та ухмах мар...»

Черетлĕ задани: тата нумайрах хĕç-пăшал тупмалла. Ку ĕçе пĕччен пурнăçлама йывăр.

– Вăрттăн ушкăн йĕркелемелле. Шанчăклă ачасене явăçтар, вĕсене партизансем тата фронтри лару-тăру çинчен каласа пар. Вăрттăн ушкăн фашистсене сĕнтермелли чăн-чăн организаци пулнине те ăнлантар. Çакна пурнăçласан пирĕн ĕçсем тата лайăхланĕç. Анчах яланах ас ту: пĕр самантлăха та, ни кăнтăрла, ни каçпа асăрханулăха çухатмалла маррине ан ман. Эпир чее, анчах тăшман та ухмах мар...

Çак вăрттăнлăха кама шанма юрани çинчен Виктор нумай шухăшламарĕ. Унăн тахçанхи шанчăклă юлташ пур – Алесь Климкович. Чи малтан вăл шăпах ун патне кайрĕ. Кĕтнĕ пекех, Алесе ўкĕте кĕртме йывăр пулмарĕ.

– Кайрăмăр, мĕн хушнине пĕтĕмпех тăвăп. Йĕри-тавра тăшман хуçаланнă чухне алă усса çеç ларас марччĕ!..

– Лăпкăрах, Алесь, – таврĕ Виктор. Командир мĕн хушнине лайăх астăвать вăл. – Пирĕн сыхă тата асăрханулла пулмалла. Ĕç яваплăхне манмалла мар. Иксĕмĕре йывăртарах пулать. Виççĕмĕшĕ кирлĕ.

Алесь пĕрлехи пĕлĕшсен ячĕсене калама пуçларĕ. Анчах Виктор хирĕçлесе пуçне сулкаларĕ çеç. Асăннисенчен пĕри «хура» ĕçрен хăранине, тепри хĕлле чăнкă сăртран ниепле те ярăнса анайманнине, виççĕмĕшĕ коллектива тиркенине аса илчĕ вăл... Ача чухне çапларах вĕсем. Пултăрах! Ун пеккисене халĕ те яваплă ĕç шанма юрамасть. Вăхăчĕ çапла. Кăшт такăнсанах çакăншăн пурнăçна туртса илĕç...

– Мелик Бутвиловский, – терĕ Алесь тинех.

– Чарăн! – савăнăçлăн кăшкăрчĕ Виктор. – Вăл шăпах кирлĕ çын, пире ура хумĕ.

Çапла вăрттăн ĕçлекен çамрăксен пĕчĕк ушкăнĕ çуралчĕ. Виççĕн аванрах та. Партизан отрядне кунсеренех хĕçпăшал та, çар хатĕрĕ те çитме тытăнчĕ. Анчах вăл партизансене çеç кирлĕ пулман иккен. Нимĕçсем те фронтри çаппасне тултарма шут тытнă.

Акă склада темиçе грузовик çитсе чарăнчĕ. Салтаксем винтовкăсене хуплана брезента сирчĕç те... мĕн курнине хăйсем те ĕненмерĕç: винтовка вырăнне брезент айĕнчен темиçе çинçе шалча çеç курăнса тăрать.

Тревога çĕкленчĕ. Склада çанăсем çинче пуç шăммине сăнланă хура тумтир тăхăннă жандармсем чупса çитрĕç. Овчаркăна йĕр тăрăх шырама ячĕç. Анчах лешĕ сăмсипе унта-кунта тăрăнчĕ те мĕскĕннĕн нăйкăшса илчĕ çеç. Йĕр çук. Каçхи вăйлă çумăр пĕтĕмпех юхтарса янă.

**(Вĕçĕ çитес номерте).**

***Вырăсларан***
***Лариса ПЕТРОВА куçарнă.***



*Куçма ТУРХАН*

# Çӳллĕ иккен Хусан хӳмисем

**(Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ çулхи 50, 51, 52-мĕш номерсенче).**

– Турă пирĕн тĕрĕс ĕçе курса тăрать. Тулăран килнĕ хыпар пире турă телей те ăнăçу суннине тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ, – терĕ вăл çар пуçĕсене çĕнтерӳ ячĕпе черкке йăтма сĕнсе. – Эпир – походри çынсем, анчах та ку савăнăçшăн кăштах пыра йĕпетсе илсен те çылăх пулас çук. Кăнтăр енчи хăрушлăх пĕтменха, çапах та ĕнтĕ эпир Хусан патнелле пĕр иккĕленмесĕр, хăюллăнрах кайма пултаратпăр. Походран çĕнтерӳпе таврăнассишĕн, тутарсене тата тепĕр çĕрте – Хусан патĕнче татăклăн аркатса тăкассишĕн, манăн тăванăмсем! Турă пире унта та телей патăр!

Государĕн воеводăсем валли хыпар пĕлтернисĕр пуçне те ĕç пулнă иккен. Крым çарĕсенчен сыхланас тесе вăл темиçе воеводăна хăйĕн çарĕсене кăнтăрарахри çулсемпе илсе кайма, тăшман вăйĕсене тĕл пулсан вĕсемпе тӳрех çапăçăва кĕме хушрĕ. Полксем пуçтарăнмалли вырăн малтан каланă тĕлтех – Сăр хĕрринче, унăн вăтам тăрăхĕнче, терĕ аслă князь. Шемякинпа Проскуров воеводăсен яртаул отрячĕсене унта çитиччен хытăрах кайма, хăйсем хыççăн пыракан посошнăй çарсемпе пĕрле часрах çулсене юсама тата кĕперсем хывса хатĕрлеме хушрĕ.

Арзамас патне çитеспе вырăс çарĕ канма чарăннă вырăна Касимовпа Темников кнăçĕсем, ирçе тата çармăс мăрсисем йышлăн пыма пуçларĕç. Вĕсем аслă кнăçа саламларĕç.

...Иштерек килĕнче вăрçа каякансене пурăнан пурнăçра пĕрремĕш хут ытлашши татăлса йĕмесĕр, хăй тĕллĕнех шăпăртатса анакан куççульне çынна кăтартмасăр ăсатрĕç. Каякансем те – Ахтупайпа Иливан – хăйсене халиччен пек мар тытрĕç. Ĕлĕкхи евĕр, майран ал шăлли çакса ял тăрăх юрласа çӳремерĕç вĕсем, тăвансенчен парне таврашĕ илмерĕç, пахчана тухса йĕтем юпипе те сыв пуллашмарĕç иçмасса. Ахтупайĕ мĕн пурĕ те пĕр япалашăн çеç кулянчĕ: аслашшĕ питĕ типсе çитрĕ унăн, эрнишернипе вырăнпа вырттма тапратрĕ, çавă вĕсем киличчен вилсе ан кайтăрччĕ терĕ.

– Асатте, эпир киличчен тем пулсан та сывал вара. Пире кĕтсех пурăн, эпир ытла нумай çӳремĕпĕр, – терĕ вăл аслашшĕпе темĕнччен калаçса ларнă хыççăн.

– Эп манакан пултăм. Ăçта каятпăр терĕн-ха эсĕ, ывăлăм? – тата тепĕр хут ыйтрĕ Пикпав старик унран.

– Вăрçа каятпăр, асатте. Вырăссем пире Хусан патне илсе каяççĕ. Тутарсене хирĕç çапăçатпăр хальхинче, – ăнлантарма тăрăшрĕ Ахтупай.

– Çапла пуль, çапла пуль, – терĕ аслашшĕ. – Тутарсемпе пĕрле каятăр пуль.

– Тутарсемпе мар, вырăссемпе пĕрле. Тутарсене хирĕç çапăçатпăр тетĕп-çке. Ăнланатни: вырăссем Хусана илесшĕн, çавсене пулăшма каятпăр унта.

– Çапла пуль, çапла пуль. Эп ватăлтăм ĕнтĕ, пĕлсе пĕтерейместĕп. Самана улшăнчĕ халь. Хăвăрăнне хăвăр пĕлетĕр пуль.

– Пĕлетпĕр, асатте, – терĕ Ахтупай. – Çавăнпа Иливанпа иксĕмĕр те каятпăр. Хусана илмесĕр те таврăнмастпăр унтан. Эс кĕт вара пире, хапха умне час-часах туха-туха пăхкала.

Тĕкĕрçĕсем саккăрăн пуçтарăнчĕç: пилĕк çамрăк та виçĕ «старик». Сухалĕсене ӳстерсе янă Ахтупайпа Северьян тата Ямпулат çамрăксем хушшинче чăнах та стариксем пекех курăнчĕç. Анчах воевода çыннисем ялсем тăрăх çырса çӳренĕ чух вĕсем çапăçăва юрăхлă тĕкĕрçĕсен шутне кĕрсе юлнă, çавăнпа аллăран иртнĕ пулсан та ку çыннисене вăрçăран хăварма май çук. Тукай мăрса Иливана каласах янă: аçуна та, Ямпулатпа Северьяна та хăвăнтан ан хăвар тенĕ. Тепĕр тесен, вĕсем питех турткалашса та тăмарĕç, тĕкĕрçĕ пулса вырăссемпе пĕрле Хусан патне кайса килессине ку вăй питти çынсем пĕрре те этем тӳсмелле мар йывăр ĕç тесе шутламарĕç. Ахтупай Хусан патне Тукай мăрса чĕнмесĕрех тепĕр хут кайса килетчĕ пуль. Вăл, арăмне сухатнă çын, Хусаншăн çапăçу пынă хушăра килте ларма пултараймастчех ĕнтĕ.

Иливан тĕкĕрçĕсене, Тукай хушнă пекех, Çĕрпĕве илсе кайрĕ. Унта вĕсем мăрсана тупаймарĕç. Ытти çĕртен пуçтарăннă тĕкĕрçĕсемпе пĕрле темиçе кун ĕççĕр лармалла пулчĕ. Хăшĕсем улăха утă çулнине кайса курса çӳрерĕç çав хушăра, хăшĕсем Çавал хĕрринче пулă тытрĕç, теприсем сулхăнра ыйха илтерчĕç. Ахтупай тăршшĕпе хăйĕн тусĕнчен, Северьянран, тăрăхларĕ.

– Кайса кил хăвăн савнийĕ патне, Северьян, итле ман сăмаха, – терĕ вăл куçа кĕрсе. – Çакăн пек ункайлă вăхăтпа та усă курмасан чăннипех ухмах пулатăн эсĕ. Килĕнчех халь вăл, Нухрат. Чӳречерен пăхса тунсăхласа кăна ларатьтĕр-ха.

– Тунсăхлатăр, – терĕ ăна Северьян. – Кĕтсе лартăр хăйĕн упăшкине. Эп ĕнтĕ ун патне тек пырса çулăхассăм çук.

– Эх, манăн сире тепре тĕл пултарас килет тупата! Мĕн калаçнă пулăттăрши эсир çавăн чухлĕ вăхăт курмасăр пурăннă хыççăн? Йăлт ирĕлсех каятăн ĕнтĕ çакăнта ăна хирĕç пулас пулсан. Çапла-и?

– Нимĕн те ирĕлместĕп. Калаçмалли сăмахăм та çук манăн унпала.

– Чун сивĕнчĕ те-и вара, Северьян?

– Тахçанах сивĕннĕ. Çуннă та кĕл пулнă чĕрере. Вăл кĕле пăтратма та кирлĕ мар.

– Юрĕ, пăтратмăпăр, – терĕ Ахтупай юлташне хĕрхеннĕ пек пулса. – Чăнах, мĕне кирлĕ пире халь вĕçкĕн мăрса хĕрĕ? Çӳретĕр çут тĕнчере хăйĕн çулĕпе. Эпир, шăрка вырăнчисем, хамăр çулпа çӳрер. Çапла-и, тăванăм?

– Тахçанах çавăн пек каламалла, – хавасланнă пек пулчĕ Северьян. – Унсăрăн ĕлĕкхи савнисем çинчен палкани йăлт йăлăхтарса çитерчĕ.

Часах вĕсене илме Çĕрпĕве Магмет Беззубов çитрĕ. Вăл ертсе пынипе тĕкĕрçĕсен пысăк ушкăнĕ ниçта чарăнса тăмасăр Сĕве вăррипелле çул тытрĕ.

Иливан телейне, Тукай мăрса хăйĕн тĕкĕрçисемпе Девлизер ялнех вырнаçнă иккен. Каччă тутар кнăçĕн хĕрлĕ сăрпа сăрланă хапхине килти хапхана уçнă пек хĕпĕртесе уçса ячĕ, лашана витене тăратса апат панă-паман паллакан хӳме шăтăкĕ патне чупрĕ.

Кӳршĕ картишĕнче пĕлтĕртенпе нимĕн те улшăнман, хӳме çумĕнче, унччenхи пекех, вут купи выртать, картишĕнче шыв валашки патĕнче хурсем какалаççĕ, пусма умĕнче тем пысăкăш çилĕллĕ хăмăр ĕне кавлесе тăрать. Хабиба курăнмасть. Пурăнать-ши вăл кунта, питне çынсене кăтартма хăяйман хитре хĕрача, е ăна пĕр-пĕр пуян тутар тахçанах хăйĕн тăваттăмĕш е пиллĕкмĕш арăмĕ тума илсе тухса кайнă-ши?

Пынă кунах Иливан Хабибана тĕл пулмарĕ. Хĕрача унта пурăннипе пурăнманнине те пĕлеймерĕ-ха вăл. Тепĕр кунне мăрса хăйĕн тĕкĕрçисене тата Магмет Беззубов çыннисене илсе кĕтмен çĕртен Сĕве тăрăх тăвалла хăпарса кайрĕ. Çул çинче вĕсем тата темиçе мăрсана хăваласа çитрĕç, ку мăрса çыннисемпе пĕрле темле пысăк ял патне пырса тухрĕç.

– Çак ялсем-и вăл? – ыйтрĕ Тукай ялан хăйĕнпе юнашар пыракан çамрăк вырăсран.

– Çак ялсем, – терĕ ăна вырăс.

– Апла таçта çитсен те тăван ялне кĕмесĕр каймасть Шах-Чура ывăлĕ.

– Вăл тĕрĕс те-ха, анчах пирĕн Сĕве леш енне каçмалла мар-и, Тукай мăрса? Кунтан эпир ун çулне пӳлейместпĕр пек туйăнать.

– Леш енне каçăпăр, – килĕшрĕ Тукай.

Юлан утсен ушкăнĕ Сĕве урлă каçса юманлăха кĕрсе кайрĕ. Кĕпер патне тата вăрман хĕррине хурал тăратрĕç.

Каç пуласпа хуралçăсем ял леш енче талккăшпех тусан йăсăрланнине асăрхарĕç. Мăрсасем иккĕленмерĕç: вĕсем кĕтнĕ Шах-Чура князь ывăлĕ утлă çар отрячĕпе тăван ялне килсе кĕчĕ.

Тукай шутланă тăрăх, Шах-Чура ывăлĕ ялтан тухса кĕперпе шыв ку енне каçмаллаччĕ ĕнтĕ, шăп та шай çак вăрман хĕррипе иртмеллеччĕ, анчах ĕç вăл ĕмĕтленнĕ пек мар, пачах урăхла пулса тухрĕ. Хăйне йĕрленине пĕлнĕ князь ялтан урам леш вĕçĕпе тухрĕ те Сĕве урлă каçма хăтланса пăхмасăрах тăвалла вĕçтерчĕ. Тукай уйăрнă темиçе мăрса ăна пĕтĕм вăйпа хыçалтан хăваласа кайрĕç.

Кунта юлнă ушкăн Тукай ертсе пынипе кăнтăр çыранри аслă çул çине ӳкрĕ.

– Ăçта та пулин Сĕве урлă каçатех вăл, Хусана çĕр çухрăмран çаврăнса каймасть, – терĕç мăрсасем. – Хыçалтан хӳре çине таптаса пынă чух питех хир тăрăх иртĕхсе çӳрес килмĕ.

Вĕсем тĕрĕс каларĕç. Çĕр çине каç ĕнтĕрĕкĕ аннă-анман малта каллех тусан йăсăрланни курăнса кайрĕ, çывăхрах лаша урисем тăпăртатни илтĕнсе тăчĕ.

– Тупата, пирĕн çинех килет, мур илесшĕ! – терĕ Тукай, çапăçу хĕрӳ пулассине сиснĕ пек, пĕтĕм çан-çурăмĕпе çӳçенсе илсе.

– Пирĕн кăшт сапаланарах тăмалла, тутарсене ик енчен те хупăрласа илме тăрăшмалла, – вĕрентрĕ паçăрхи çамрăк вырăс.

– Çук, апла мар, – хирĕçлерĕ Тукай. – Ушкăнпах тăратпăр. Тутарсен куçĕ умĕнчех саланса каятпăр. Вара вĕсем эпир мĕнле йышлăн пулнине хăйсемех кураççĕ. Ман вăрах çапăçса çынсене пĕтерес килмест, Шах-Чура ывăлне тӳрех парăнтарас килет.

Тукайпа çамрăк вырăсăн тек калаçса тăма вăхăт пулмарĕ, çывăхри ыраш пуссинчен вĕсем çинелле пĕр ушкăн юлан ут ыткăнса килчĕ. Тутарсем çывăха çитеспе Тукай отрячĕ икке пайланчĕ, тĕкĕрçĕсемпе вырăс ратникĕсем хыттăн кăшкăрса малалла тапăнса кĕме тытăнчĕç. Шах-Чура çыннисем хăйсен çулне капла пӳлессине кĕтменччĕ пулмалла кайрĕ, аптраса ӳкрĕç. Ушкăн пăтрашăнса кайрĕ, чылайăшĕсем тарса хăтăлас тесе лашисене аяккалла хăваларĕç.

**(Малалли пулать).**

# КАЧАКАНА ПУÇÇАПНĂ



***2015 çул кăвак йывăç Качака çулталăкĕ шутланать. Тухăç гороскопне Китай культурипе философи йăли-йĕркине тĕпе хурса йĕркеленĕ. Халапа ĕненес пулсан, вуникĕ чĕрчуна (çав шутра Качакана та) Будда пĕрер çулталăк парнеленĕ. Японсем вара Качака вырăнне Сурăх çулталăкĕ теççĕ.***

Китай мифологийĕпе килĕшÿллĕн, Качака пĕлĕт çинче пурăнать, хăш чухне çеç çĕр çине анать. Вăл – пире пурнăç çумăрĕ ярса паракан пĕлĕт сăнарĕ. Качака – асамçă, çиçĕм юлташĕ, çавăн пекех çепĕçлĕх палли те. Вăл нимĕнле чăрмавран та хăрамасть. Ыттисене яланах хÿтĕлеме хатĕр, унăн шалти туйăмĕ вăйлă аталаннă.

Тĕрлĕ çĕршывра, тĕнре тата астрологире ку çулталăк палли хăйне евĕр пĕлтерĕшпе çÿрет. Авалхи грек мифологийĕнче Амалфея качака сăнарне пуян та хитре кăтартса панă. Вăл амăшĕн ăшшине тата пуян пурнăçа сăнлать.

Ренессанс ÿнерĕнче качакасене кÿлекен чĕрчунсем пек кăтартнă. Вĕсем турăсен урапisene туртаççĕ.

Египетра Зевс турра Амон тенĕ. Ăна гимн халаллаnă, «Олимп хуçи» тесе чĕннĕ, ăна чысласа Фивра храм çĕкленĕ. Унăн чĕрчунĕ – така. Ливи Амонне çавра майракаллă сăнланă. Египтянсемшĕн качака турă сăнарĕ тата этемĕн пултаруллă ăс-хакăлĕ пек шутланнă. Пĕр халапа ĕненес пулсан, пушхирте усăлса çÿренĕ чухне Дионис – иçĕм çырлипе хаваслăх турри – ниепле те шыв тупайман. Сасартăк хăйăр ăшĕнчен така тухнă та шыв кăтартнă. Дионис çав тери савăннă, Зевса çак такана çăлтăрсен ушкăнне кĕртме ыйтнă. Шыв тупăннă çĕрте Дионис Амон Зевс храмне туса лартнă. Скандинавири аслатипе çиçĕм турри Тор Зевс евĕрлĕрех. Çавăн пекех ăна славянсен Перунĕпе, литва халăхĕн Перкунасĕпе, инди пушанĕпе танлаштарма пулать. Тор турă тÿпере хăйĕн урапипе ярăнса çÿренĕ, лаша вырăнне ăна икĕ качака туртнă. Вĕсем шăлĕсемпе хыт шатăртаттарни аслати кĕмсĕртетнине аса илтернĕ.

Ыр-усал тĕнĕнче тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ халăх качакана пуççапни паллă. Флиунт хулинче пурăнакансем тĕп лапамра пăхăр качака палăкне лартнă, ăна турă вырăнне хунă. Ингушсемшĕн качака сăнарĕ – Мустагударг – çумăр турри.

Норвегире тата Германире çак чĕрчуна питĕ хисепленĕ, çăкăр чунĕ пек сăнланă. Тулă аксан Качакана пуççапнă, тыр-пула сыхлама ыйтнă. Хăш чухне вара тыр-пул пуçтарнă вăхăтра Качака чунне тав туса пĕр пайне пуçтармасăр хăварнă.

### Эсир пĕлетĕр-и?

...1996 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнче «пробиркăран» пĕрремĕш чĕрчун çуралнă – Долли сурăх.

...Сурăх питĕ чăтăмлă, çавăнпа пур çĕрте те пурăнаять.

...Çак чĕрчунăн хÿри мĕн чухлĕ вăрăмрах тата хăватлăрах, вăл çавăн чухлĕ пахарах.

...Ирландире сурăхсем çине тĕрлĕ тĕслĕ йĕрсем сăрлаççĕ. Хуçисем вĕсене ют выльăхпа пăтраштарасран çапла тăваççĕ. Çул кăтартса çÿрекенсем тÿрех асăрхаттараççĕ: «Кунта хуть те ăçтан та сурăх тухма пултарать, хатĕр пулăр».

*Лариса ПЕТРОВА хатĕрленĕ.*

ГОРОСКОП

# Мĕн сунаççĕ пире çăлтăрсем?

**Çĕнĕ, 2015 çула, кĕтĕмĕр. Мĕн парнелĕ-ши вăл пире? Сурăх (Качака) çулталăкĕнче мĕн кĕтетха? Хуравсене тупма вара çăлтăрсен «пăшăлтатăвне» итлер. Вĕсен сĕнĕвĕсемпе кирлĕ пек усă курар, канашĕсене асра тытар.**



Сурăх çулĕнче **Йĕкехÿресен** çирĕп кăмăллăрах пулма тивет. Сывлăх пирки те ан манăр. Пĕрпĕр ĕçе пуçăниччен тĕплĕн шухăшлăр. Пуçланине вĕçне çитерме тăрăшăр. Унсăрăн кайран ÿкĕнмелле пулĕ. Урокра тимлĕхе ан çухатăр, вĕрентекен сăмахне ăша хывăр. «Вĕренÿре йывăр, анчах çапăçура çăмăл», – тенине асра тытăр. Вара чĕрĕк вĕçĕнче дневникри лайăх паллăсем хăвăра кăна мар, çывăх çыннăрсене те савăнтарĕç.



**Вăкăрсене** Сурăх чăтăмлăрах пулма ыйтать. Юлташăрсем пăтăрмаха лексен вĕсене пулăшăр. Пушă вăхăта телевизор, компьютер умĕнче ан ирттерĕр. Усă сывлăшра ытларах пулма тăрăшăр. Спортпа туслашăр. Тĕрлĕ ăмăртура тупăшăр. Унти çитĕнÿсем сире малалла ăнтăлма хавхалантарĕç. Вĕренÿ çăмăлах килмесен те алла усмалла мар. Кăткăс лару-тăру сиксе тухсан çывăх юлташăрпа канашлăр.



**Тигрсене** пур çĕрте те ăнăçу кĕтĕ. Вĕренÿре те, спортра та çитĕнÿсем тăвайăр. Телей кайăкне çеç алăран ан вĕçертĕр. Тахçанах пĕлнĕ арçын ачапа (хĕрачапа) та туслашăр. Унтан нумай çĕннине пĕлме май пулĕ. Обществăлла ĕçсене хастар хутшăнни те аван.



**Кроликсен** кăçал пĕчĕк пăтăрмахсене çĕнтерме тивет. Тăвансемпе хирĕçтăру тухма пултарать. Анчах ку вăхăтлăха çеç. Кайран йăлтах йĕркеллĕ пулĕ. Кăмăл-туйăм пăсăлсан та ытлашши ан пăшăрханăр. Çывăх вăхăтсенче мĕн тăвассине палăртăр та ăна пурнăçа кĕртме тăрăшăр. Темле лару-тăрăва лексен те тĕллеврен ан пăрăнăр, ăна çийĕнчех пурнăçлаймасан та кайран май пулатех.



**Аçтаха** çулĕнче çуралнисем савăнма пултараççĕ! Кăçал вĕсене пур çĕрте те ăнĕ. Кĕтмен парнесем, кăмăллă улшăнусем нумай пулĕç.



**Çĕленсене** çăлтăрсем пур юлташпа та, тăванпа та, пĕлĕшпе те кăмăллă пулма сĕнеççĕ. Хăваршăн пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйшăнусене васкаса тумалла мар. Унсăрăн кайран ÿкĕнмелле пулĕ. Телей çумрах çÿренине те ан манăр. Ăна вăхăтра курма пĕлни кăна кирлĕ. Ытти чухнехинчен ытларах тăрăшсан вĕренÿре те çитĕнÿсем тăвайăр.

**Лашапа Сурăх (Качака)** ĕлĕкренех туслă пурăннă. Çавна май вĕсен пурнăçĕнче телейпе лăпкăлăх çеç хуçаланĕ. Кăмăллă тĕлпулу, кĕтменлĕх чылай пулĕ.





**Упăтесен** уйрăмах тимлĕ, асăрхануллă пулмалла. Хăваршăн пĕлтерĕшлĕ ĕçре çеç вăй хурăр. Ыттисене ан пуçăнăр, вăй-хала пустуй тăкаклама сĕнмеççĕ кăçал сире çăлтăрсем. Пĕлнĕ-пĕлмен çынсемпе ытлашши сăмах ан ваклăр, вĕсене ан ĕненĕр. Хăш-пĕр «юлташăра» та тимлĕн сăнăр. Вĕсен хушшинче сирĕн туслăхăра тивĕç маррисем те пулма пултараççĕ.



**Автан** та Сурăхпа лайăх хутшăнура. Кăçал çак кайăк паллипе çуралнисем кирек мĕнле тупăшăва, конкурса, ăмăртăва кайсан та çĕнтерÿпе таврăнĕç. Çавна май унта пĕр иккĕленмесĕр хутшăнма пултаратăр. Сурăх сире ăнăçу та телей парнелĕ.



**Йытăсем** пуринпе те çăмăллăнах пĕр чĕлхе тупайĕç. Ăнăçу çулталăк тăршшĕпех сирĕнпе пĕрле пулĕ. Çавна май çĕнĕлĕхсем те нумай кĕттермĕç. Çĕнĕ çынсемпе паллашма, туслашма вăхăт. Анчах унччĕнхи юлташсене те ан манăр. Çĕннисем лайăххах та, киввисем вара тата лайăххах. Çакна асра тытăр. Вĕренÿре çанă тавăрсах тăрăшăр. Унсăрăн палăртса хунине пурнăçа кĕртме кăткăсрах пулать.



**Хир сыснисене** çăлтăрсем спортпа туслашма, тĕрĕс апатланма, пĕр режима пăхăнма сĕнеççĕ. Чылай пăтăрмахран хăтăлма тивĕ кăçал вĕсен. Çавăнпа та вăй-хала перекетлемелле. Ытларах çуран çÿреме тăрăшăр. Çан-çурăма пиçĕхтерĕр. Йĕлтĕрпе ярăнни те усăллă. Кĕнеке нумайрах вулани те пăсмĕ. Çĕнĕ çынсемпе паллашнă чухне тимлĕхе ан çухатăр. Вĕсемпе асăрханулларах пулăр.

***Сурăх (Качака) çулталăкĕнче çуралнă паллă çынсем:*** Микеланджело, Брюс Уиллис, Борис Ельцин, Франц Кафка, Мэл Гибсон, Михаил Горбачев, Бил Гэйтс, Памела Андерсон, Роберт де Ниро тата ыттисем те.

*Нина ЦАРЫГИНА хатĕрленĕ.*




**Январь / Кăрлач**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| ыт. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| юн. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| кç. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| эр. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| шм. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| вр. | 4 | 11 | 18 | 25 | |

**Февраль / Нарăс**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 2 | 9 | 16 | 23 |
| ыт. | | 3 | 10 | 17 | 24 |
| юн. | | 4 | 11 | 18 | 25 |
| кç. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| эр. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| шм. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| вр. | 1 | 8 | 15 | 22 | |

**Март / Пуш**

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| ыт. | | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| юн. | | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| кç. | | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| эр. | | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| шм. | | 7 | 14 | 21 | 28 | |
| вр. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | |

**Апрель / Ака**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| ыт. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| юн. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| кç. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| эр. | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| шм. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| вр. | 5 | 12 | 19 | 26 | |

**Май / Çу**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 4 | 11 | 18 | 25 |
| ыт. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| юн. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| кç. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| эр. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| шм. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| вр. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |

**Июнь / Çĕртме**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| ыт. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| юн. | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| кç. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| эр. | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| шм. | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| вр. | 7 | 14 | 21 | 28 | |

**Июль / Утă**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| ыт. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| юн. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| кç. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| эр. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| шм. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| вр. | 5 | 12 | 19 | 26 | |

**Август / Çурла**

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| ыт. | | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| юн. | | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| кç. | | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| эр. | | 7 | 14 | 21 | 28 | |
| шм. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | |
| вр. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | |

**Сентябрь / Авăн**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| ыт. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| юн. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| кç. | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| эр. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| шм. | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| вр. | 6 | 13 | 20 | 27 | |

**Октябрь / Юпа**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| ыт. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| юн. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| кç. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| эр. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| шм. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| вр. | 4 | 11 | 18 | 25 | |

**Ноябрь / Чӳк**

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| ыт. | | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| юн. | | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| кç. | | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| эр. | | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| шм. | | 7 | 14 | 21 | 28 | |
| вр. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | |

**Декабрь / Раштав**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| тн. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| ыт. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| юн. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| кç. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| эр. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| шм. | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| вр. | 6 | 13 | 20 | 27 | |